С. ШĂПЂĂК



# КУЛĂШ КУСТĂРМИ

СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ
МУСКАВ ★ 1931

Ç. ШАПĔАК

# КУЛĂШ КУСТĂРМИ

(ФЕЛЙЕТТОНСЕМ)

СССС-ри Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви
Мускав • 1931

Главлит № А-85388 Заказ № 3479 Тираж 4000 экз.

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва,
Шлюзовая набережная, 10.

## ПĔРЕНЕ ХАÇАЂĔ.

Пирĕн аттесем куккисемпе питĕ лайăх пурăнђĕç. Çавăнпа та кашни ĕçкех çӳређђĕç. Аттесемпе пĕрле епĕ те кайаттăм, йулмастăмђђĕ. Куккисен ађисем те пирĕн пата çӳређђĕç. Питĕ килĕштереттĕмĕрђђĕ епĕр. Курнăçнă ђухне вара пĕр уйрăлмасăр выљаттăмăр. Ех... савăнаттăмăрђђĕ çав... Питĕ йурататтăмăр епĕр пĕр-пĕрне.

Куккисемпе аттесем ĕçкĕрен ĕçке хутшăнни нимех те мар-ха вăл, лаша кӳл те—тух та кай. Епĕр кунтан та пысăкрах ĕçсем тăваттăмăр: пĕр-пĕрин хушшинђе çырусем çӳрететтĕмĕр. Йалтан йала çыру çӳретесси мĕн вăл, çыр та—йар пĕр-пĕр çынтан. Епĕр тата ђаплăрах çӳрететтĕмĕр: йалтан—хулана, хуларан—йала пуштăпа, марккăсем çыпăçтарса.

Ванитсав Кĕркури Ђĕмпĕр хулине ђул катăкĕсем, çĕпре амăшсем пуçтарма кашни çуркуннех кайса килеђђĕ. Çав Ванитсав Кĕркурине пĕрре çыру парса йатăм:—çак çырăва аслă куккисен ывăљне шкула кĕртсе пар-ха, терĕм...

Илсе кайрĕ. Çав çырăва вара куккисен ађисем пайан кун та илмен.

Çыруне парса йани кăçал çуркунне шăпах 9 çул тултарђĕ. Çынран парса йанă çыру ахаљ çитмест вăл.

Çавăнпа та епĕр:—пес крехха, теттĕмĕр те, пуштăпа çӳрететтĕмĕр.

Çыру тесен—çыру вăл: темĕн те çыраттăмăр вара. Пĕрре епĕ: „Виктăра шутсăр хытă хĕртрĕм“, тесе çырса йатăм. Тепĕр çыру çине вара аслă куккисен аслă Аркатийĕ: „Хаљ çынна пӳрнепе те тĕкĕнме йурамаст, сута парăççĕ“, тесе çырса йађĕ. Çавăнтан вара епĕ хампала тантăш ађасемпе çапăçма ђăнах та пăрахрăм. Аслисемпе, кĕçĕннисемпе тӳпелешнине кунта каламасан та йурат пуљ, тетĕп. Мĕншĕн тесен вăл—çекрет.

* * *

„... Епĕр кунта пĕрене хаçаҪĕ кăларатпăр. Сирĕн йалта кăларма тăрăшмалла. Епĕ хаҪ пĕрене хаçаҪĕ çине алпусаканĕ—„ретактăр“, тесе çырса йаҪĕ ман пата пĕрре аслă куккисен Аркатийĕ Ҫĕмпĕртен. Вăл ун Ҫухне унти шкулта вĕренеҪҪĕ. АнҪах вăл хаçат—мĕнле йапала, ăна мĕнле кăлармалла? Нимĕн те çырман.

Аслă куккисен Аркатийĕн сăмахне епĕ ĕлĕкех йураттăм. АхаҪ те хĕр пек калаçаҪҪĕ тата çитменнине. Çавăнпа та пĕрене хаçатне те кăларма шут тытрăм. АнҪах мĕн вăл, мĕнле кăлармалла? Хут çине пулсан—пĕлĕттĕм. Хут çине çырнă хаçатсене куркаланă еп. Ку ара—пĕрене!..

Пĕрре Максăм пиҪҪесем хăйсен хапхи умĕнҪе хăма çураççĕ. Епĕ вĕсем патне пырса ҪылайҪҪен тăтăм. Максăм пиҪҪесен çĕнĕ хапхи куç умĕнҪен те кайма пĕлместь, куçа çийет.

— Ай-ай, пĕрене хаçаҪĕ тума лайăх ку хапха, тесе шутлатăп ăшăмра. Çавăнтах тата çип çапмалли кăмрăк тăра парат. Акă пурнăç çитрĕ, тетĕп савăнса,

Максăм пиҪҪепе Усăп пиҪҪе кăнтăрлахи апат çиме киле кĕҪĕç. Епĕ хапха çумне пĕрене хаçаҪĕ çырма утрăм. Темĕн тесе çырас — пуçа нимĕн те аса килмест. Ҫылай вăхăт иртрĕ шутласа тăрса. Сасартăк Максăм пиҪҪепе Усăп пиҪҪене йĕкĕлтенĕ сăмахсем аса килҪĕç.

„Максăм, Максăм, макакак,
Хура Ҫăххи какакак.
Усăп пиҪҪе — усăк кут,
Ман хăлхана хыт ан турт“!

тесе çырса пĕтертĕм те, ретактăр тесе алпусма хатĕрленсе тăратăп. АнҪах ретактăр тенине аслă куккисен Аркатийĕ мĕн пулатне пĕлтерсе йаман та, вăл çăмах мĕне пĕлтернине пĕлместĕп. Çавăнпа та ретактăр вырăнне „репеттă“ тесе çыртăм. Унтан хамăн усă сассăмпа:

— Максăм, Максăм, макакак,
Хура Ҫăххи какакак.
Усăп пиҪҪе — усăк кут,
Ман хăлхана хыт ан турт!

Ре...

— Йураҭ. Хытă туртмăп, терĕ мана Уçăп пиђђе ман хăлхаран йарса тытса.

— Ай-ай, тархасшăн йар, Уçăп пиђђе!

— Вăт, шуйттан ађи-пăђи. Мĕн турăн, çĕнĕ хапхана. Вăт сана, вăт сана!..

Пĕр вĕçерĕнсен çиçĕм пек тартăм. Виçĕ кун тăраймасăр выртрăм. Йумăç карђăка илсе пыђĕç. Мана усал йышăнасран ман пата хађă хурађђĕç. Йумăç пыриђђен анђах епĕ вăл хађђа айакалла илсе хутăм. Урлă сак хушшине хаđă анса кайма тапратрĕ те, тытăмĕ айалалла, вĕçĕ çӳлелле пулса çакăнђĕ. Ăна епĕ кайран илсе хума маннă. Йумăç карђăк пыђĕ те, çав хаđă çине лак! ларђĕ. „Ан лар“ тесе калама вăтантăм. Çĕмĕрлен пек тухса сирпĕнђĕ йумăç карђăк.

* * *

Сывалтăм. Аслă куккисен Аркатийĕнђен çыру илеймерĕм. Анђах пĕрене çине хаçат кăларас ĕç пуç çинђех тăраҭ. Çын хапхи çине çырма йурамасҭ, хăлхаран туртаççĕ. Хамăрăн хапха çук. Вăт тамаша!

Хамăр умра мунђа тума купаланă вĕтĕрех пĕренесем выртађђĕç. — Ухмах еп, терĕм, хама хам. Ара хапхасем çине çырса çӳретĕп. Апла вăл—хапха хаçаđĕ пулаҭçке манăн... Аслă куккисен Аркатийĕсем пек пĕрене хаçаđех кăларасђĕ манăн та...

Пĕр катăк пурă илтĕм те, тухрăм хамăр пĕренесем çине пĕрене хаçаđĕ кăларма. Пăхатăп—пĕр йака пĕрене те çук: пурте хуйăрлă, туратлă. Мĕн тăвас? Çын пĕренисем çине кайсан, хăлхаран лекет. Мĕн пулаҭ те, мĕн килет!.. Малтанхи пĕрене хаçаđĕ вĕт! Йаках пулмасан та, вăрçаканах пулмĕ, тетĕп.

Манăн татах тытăнса тăмалла пулђĕ. Те вырăсла кăларас, те ђăвашла кăларас. Вырăсла кăларсан—пуп мурĕ вуласа ырă кураҭ; ђăвашла кăларсан—хампа танăш ађасем те вулаççĕ. Ман вĕсене хĕрхенес килет. Хаљ вĕсемпе çапăçмастăп вĕт епĕ!..

„Пĕрене хаçаđĕ“, тесе çырас, тесе шутласа ларатăп пĕренесем çинђе. Хă-ă, мĕншĕн „пĕрене“ тесе çырас? Пĕренесем ахаљ те пĕренех ĕнтĕ вĕсем. „Хаçаđĕ“ тесе çырас. Çынсем ăна ахаљ те „пĕрене хаçаđĕ“ тесен вуламалла. Мĕншĕн тесен пĕрене çинђе! Мăн саспаллисемпе:... ХАÇАЂĔ, тесе çырса хутăм. Çав вăхăтрах çа-

мăр çума тытăнђĕ. Хаçата витме киле хăмасем илме кĕтĕм. Еп тухнă çĕре Салтак Кĕркури кађаки: меке-ке! тесе макăрса тăраť: еп пурăпа çырнине—те çăнăхпа çырнă тесе шутланă—йăлт çулласа çисе йанă. Шăртланнипе кађакана хăвалама тытăнтăм. Пĕренесем çине, çўлеллех хăпарса кайрĕ. Епĕ те ун хыççăн. Пĕренесем шăлтăр-шалтăр! турĕç.

— Айуй, ах, ай, пĕтрĕм! Ман сулахай ура пусмасť.

*
* *

Ура мăкăлтаннипе пĕр уйăх выртрăм. Аслă куккисен Аркатийĕнђен çыру илеймерĕм. Пĕрене хаçађĕ кăларас ĕç пуç çинђех тăраť. Анђах хапха çине çырма йурамасť—вĕтеççĕ; пĕрене çине çырма тошĕ йурамасť—йăтăнса анаççĕ, ура мăкăлтанаť. Аптрарăм.

Урам варрипе утса пыратăп. Тусан çинђе ура йĕпĕ пулса пыраť.—Ха, терĕм. Патакпа çырма та тытăнтăм. Питĕ те лайăх хаçат пулаť. Анђах тăшман хампала пĕрлех вĕт: çавра çил те, йăлт шăлса тăкрĕ ман хаçата.

Тарăхнипе пўрте кĕтĕм те лартăм Пирĕн муђи каскалама ăстађђĕ. Çĕнĕ сĕтел тунă, ăййи те çавăнтах выртаť. Аййа тытрăм та, сĕтел çине ђăр-р! ђĕртĕм. Йĕр питĕ лайăх пулаť.

— Ха, тавай, „сĕтел хаçађĕ" кăларас! Сĕтел çине ăйăпа çырса хаçат кăларма тытăнтăм. Муђи вуласа пăхсан тĕлĕнсе кайаť ĕнтĕ, тетĕп. Шăпах муђи пырса кĕђĕ.

— Ха, муђи, сĕтел хаçађĕ кăларап...

— Вăт мур илмен ађи, вăт шеђмă...

Ман çинђе ђăпăркка йавкаланаť анђах. Пысăк хуйха кайрăм. Ăçта кăларас ку хаçата. Çырмалли вырăн та йулмарĕ ĕнтĕ... — Е-е-е! терĕм. Тавай шыв çине кайса „пĕве хаçађĕ" кăларас, терĕм. Пĕве хĕрринелле пыратăп.

— Кикака-кикака-кикака! Шап-шап-шап! Хусахви инкесен хур аçиĕ кăшкăра-хăшкăра вĕтме тытăнђĕ мана. Аран тарса хăтăлтăм. Çапла вара „пĕве хаçађĕ" кăларасси те пулмарĕ.

Тепĕр кунне вăрмана, вăрманти йăвăçсем çине „йăвăç хаçађĕ" кăларма каймашкăн шутланăђђĕ. Анђах каçхине аслă куккисен Аркатийĕнђен çыру илнипе хамăн плана улăштармалла пулђĕ. „Епĕ киле тавăрăнтăм. Хаçат кăларма тытăнатпăр хамăр йалта. Пулăшма кил", тесе çырса пађĕ мана аслă куккисен Аркатийĕ.

Ђун уçалсах кайрĕ. Тухрăм та, вĕçтертĕм куккисен йалне, хаçат кăларма. Хамăр йалта ни „хапха хаçађĕ", ни „пĕрене хаçађĕ", ни „тусан хаçађĕ", ни „сĕтел хаçађĕ", ни „пĕве хаçађĕ" кăлараймарăм. Вăрманти „йăвăç хăçађĕ" те кăламасăрах йулђĕ. Куккисен йалĕнђе „пĕрене хаçатне" тӳрех таса хут çине çырса кăларма тытăнтăмăр. Çавăнтан вара „пĕрене хаçађĕ" мĕн иккенне те лайăх пĕлтĕм, унта мĕн çинђен çырмаллине те вĕрентĕм. Пĕђĕкçеçђĕ епĕ ун ђухне, хамăр йал шкулĕнђе те икĕ çул кăна вĕреннĕђђĕ. Анђах çавăнтан хамăр йалта „пĕрене хаçађĕ" кăларассине пуçласа йатăм. Ретактăрĕ те хамах пултăм. Ун ђухне вара ретактăр кам иккенне те тĕплĕнех пĕлтĕм.

Çапла пуçласа йатăм вара епĕ хаçат ĕçне. Хаљ ĕнтĕ Шупашкарта тухса тăракан хаçатсем çине те, шурналсем çине те çыратăп. Хăш-пĕр ђухне Мускаври хаçатсем çине те тĕкĕнетĕн. Е-е... çамрăк малаллах. Малаллах çамрăк. Малаллах...

---

## ПӲРОКРАТ.

— Ей, Иван Павăлђ! халех пур йалканашсене те çыру çыр. Штопă вĕсем волоккиттăпа кĕрешђĕр, терĕ çекреттарне ђĕнсе райĕçтăвком претçетаттĕлĕ.

— Хорош!

— Ђасрах!

Пĕр 10—15 минутран пур йалканашне те хатĕрленĕ. Хутсем претçетаттĕл умĕнђе выртаççĕ.

— Ма мана çеç алпусмалла турăн? Ху та пус!

— Хорош!

— Телопроисвотиттĕлне те пустар.

— Хорош.

— Суйа хут тейĕç, çав перепписђĕкне та пустар.

— Хорош.

— Сторăша пар, вăл та пустăр.

— Хорош.

— Пурте пĕр тĕслĕ ђернилпа пуснă. Пурне те хам пуснă, тейĕç. Прикасывайу переписаť.

— Хорош.

20 минутран тĕрлĕ тĕслĕ ђернисемпе алпуснă ђиркуљђар выртаť.

— Ма хама малтан пустармарăр? Превышшени ђина? Переписат̆!

— Хорош.

Хыпаланђăк çекреттар 7 хутђен çырса пађĕ. Анђах нийепле те май килмерĕ.

— Уйтитте вы вçе к ђортту! терĕ те претçетаттĕл, хăй çырма тытăнђĕ.

— Çак хутпа сире волокиттăпа кĕрешме ђĕнетĕп. Çак хута илсен, илнине нарăђнайпа пĕлтерĕр. Хăçан, тата кам илнине çырăр. Хутне пиђетлесе йарăр. Васкарах тăвăр.

— Тођкăсене, сăпеттуйсене лартма ан ÿркенĕр.

Вĕçтерђĕç йамшăк лашисем йалсене хутпала.

Тепĕр кунне ирех ĕçтăвком умĕнђе 10—12 йуланут. Вĕсем йалсенђен распискăсем илсе килнĕ. Пурте ђеретпе претçетаттĕле кĕртсе параççĕ.

— Лайăх алпусман, тесе хуђĕ пĕрин çине ђаплă пуçлăх,—восвраттит.

— Нет сăпеттых, восвраттит.

— Нет исхоŏашђехо номеру, восвраттит.

Çапла пурне те кайалла салатса, вĕсем хыççăн ĕçе тĕплĕ тума вĕренмелли приккас салатрĕ. Распискăсем йама çĕнĕрен приккас çырђĕ.

Çапла кĕрешет пÿрократ волоккиттăпа.

---

## ЙАЂĔ ÇУК.

— Ађа йат хуртарма килтĕм те еп.

— Кунта мар, леш сĕтел çине кай.

— Кунта-и ађа йађĕ çыракан?

— Хăçан тавăрăннă ара сан ађу?

— Виçĕ кун çитет.

— Ма хăй килмест вăл?

— Хăй утаймаст̆-ха хаљ.

— Ранĕн пулса килнĕ-им?

— Суранлă мар, терĕ те павăшки.

— Мĕнле павăшки.

— Ара, çураттараканĕ.

— Е-е, сан анђах çуралнă еппин. Кунта салтака кайакансемпе салтакран тавăрăннисене çеç çыраççĕ. Вăн, çав сетел патне кай.

— Çакӑнта-и çыраканӗ?

— Суккӑр мар пуљ ес, çырнине курмасӑр. Мӗн çырмалла?

— Ађа йађӗ хумалла... та.

— Кунта мар, лере кай.

— Ађа йатне кунта çыраççи?

— Çук.

Сӗтелтен сӗтеле çӳресе аптрарӗ шеремет Тӗнпуç Йаккӑвӗ.

Саççемех аптрарӗ Йакку.

— Есӗ çыратӑни тен? тесе ыйтрӗ йулашкинђен пӗр шур сухаллӑ старикрен.

— Çырас. Мӗн çырмалла?

— Ађа йађӗ.

— Тавай хутна.

— Кунта çекреттар çеç пуснӑ, претçетаттӗлне те пустарса кил. Унсӑрӑн çырмастпӑр.

Вӗçтерђӗ Йакку килелле претçетаттелӗ алпустарма.

Вӑт тӑшман! претçетаттӗлӗ уйӑхлӑха ӗçлеме кайнӑ.

* * *

Пӗр уйӑх та виçӗ кун иртсен претçеттатӗл алпуснӑ хута илсе кайрӗ Йакку çыртарма.

— Хаљ çырса пар ӗнтӗ.

— Ах, ӗçе тума пӗлместӗр есӗр, хуђӗ çине пиђетне пусман. Пиђетсӗр ӗненместпӗр. Кайса пустарах, тӑванӑм.

Енсене хыçрӗ те, утрӗ Йакку килелле пиђет пустарма.

Вӑт, тамаша! Каллех претçетаттӗлӗ вӑрмана ђылайђђен пурӑнмаллах кайнӑ. Арӑмне пиђетне парса хӑварнӑ та, анђах упӑшкисӗр вӑл та пусса памасť.

Ађа çурални тӑватӑ уйӑх çине кайрӗ, йат хуман. Çыртарман.

Аран-аран, пӗр ирхине ирех тӑрса, претçетаттӗле пиђет пустарса, ђуптарђӗ кантура çыртарма Йакку.

— Хаљ тӗплех туса килтӗм, çырӑр ӗнтӗ.

— Тӗплеххи—тӗплех те... Анђах ку хута çыртарни тӑватӑ уйӑх тултарнӑ. Вӑл хушӑра сан ађу тен вилнӗ пуљ. Çавӑнпа та çырма пултараймастпӑр. Çӗнӗрен тӗплесе кил. Атту штрав тӑватпӑр.

*
* *

Ађа ларакан пулђĕ.—Те-те-те, тет. Атте тенĕ пекех туйăнаť Йаккăва. Уншăн вăл темĕн ђул хĕпĕртет. Анђах йађĕ çук.

Тепре лайăх тĕплесе çитрĕ Йакку кантура.

— Ну хаљ çырăр ĕнтĕ.

15 пус укçа пур-и?

— Çук. Еп хам та çын патĕнђе пурăнатăп.

— Укçасăр çырмастпăр. Ытлах укçу çук пулсан, çелсоветран утостоверени о несостойаттĕлноçти илсе кил.

— Ех ку ађана çуратиђђен çуратманни, терĕ Йакку. Пуçне ђиксе утрĕ йалнелле.

*
* *

Хаљ ĕнтĕ пурте пур. Çыртарапах тесе, савăнсах утрĕ Йакку кантура.

— Хаљ пурте пур ĕнтĕ, тăванăм, çырса пар тархасшăн.

Çырса ларакан хутне тытрĕ те, тинкерсе пăхса:

— Кунта ним те çук, тесе çырнă. Апла пулма пултараймасť. Милитси аллине тĕрĕслеме йаратпăр. Ĕçе тĕрĕслесе пĕтермесĕр ађу йатне çырмастпăр.

Йакку темĕн каласшăн, кролик тути пек, тутипе мĕкĕлтеттерме тытăнђĕ. Анђах ăна сасартăк:

— Ан кĕрле, есĕр суйма йурататăр, тухса кай, тесе пӳлсе ҳуђĕ çыраканĕ.

Тухса утрĕ шеремет Йаккăвĕ.

Ађа ђупаť. Çыртарман. Йађĕ çук.

---

# ЂЁЛХЕ.

Пайан райĕçтăвком туллийех халăх. Унта йалканаш претçетаттĕлĕсен ернере пĕрре пулса иртекен пухăвĕ. Райĕçтăвком претçетаттĕлĕ алли-урипе тапăртатса токлат тăваť. Каламан сăмах та хăвармарĕ. Йуратсан-йуратсан утмалла, теççĕ. Çавăн пекех претçетаттĕлĕн ђĕлхи ђăвашла сăмахсене выранăн-выранăн вырăсла та мар, ђăвашла та мар лаплаттара - лаплаттара хураť.

Хăшпĕр сăмахне халăх ăнланса та йулаймасť. Леш çаплах çаптарať.

— Вăт, пирĕн, таваришђи, во што пы то ни стало, ђăваш ђĕлхине реалисатсилес пулať тăрăшмалла. Пес етово, пирĕн ђăваш халăхĕ никкохта та малалла каймасť. Тђа етово сире пурне те присывайу поротсă всех. И пайанхи сопранине претлакайу приђať относçиттĕлнă çавăншăн постановлени йышăнма.

— Йышăнас, йышăнас!

— Поетому, снађђăт, ырантан пуçласа вçе отношшени путем писať ђăвашла.

Тĕрлĕ ĕçсем тăрăх тĕрлĕ постановленисем йышăнђĕç. Халђ ĕнтĕ ђăвашла çыратпăр малашне, терĕç те, тухса утрĕç килсене.

Виç - тăват кун иртрĕ. Претçетаттĕл шăратať çеç халђхи ђăваш ђĕлхине:

-- Пур çелйалканашсоветсене те вçем.

На основани ђăвашĕçтăвкомран хут килнĕ тăрăх еттим отношени сире пурне претлакať тăватăп çеменашăн нуштатсă тăвакан краштăнсен именной спискисене претставит тума с укасанием к нему миçе пăт, каккуй çемена нушнă, потом мĕнле тырă кирлĕ. Пес еттово çемена валеçме невосмошнă. Ето вы хăвăр та пĕлетĕр. Скорей претставит тума тăрăшăр.

Претçетаттĕл РИК-а Пасаров.

Потоштите, товариши, немношкă манса оставил. Вы тоше хăвăр та списокне ђăвашла писať тăвăр. Претставиť тăвăр с нарођным.

Пасаров.

Та, кроме пуçне сирĕн йала патайăт не пођше 100 пăтран кайа мар. Потвотăсене те прикотовăť туса хурăр.

Пасаров.

Реалисатси тенине, тирпейлĕх решимĕ пекех, икĕ майлă та ăнланма пулať. Пĕр йенђен — пĕтерсе хурас; тепĕр йенђен — ... çак Пасарăв йулташ та иккĕшне те пĕрлех çырať. Çивĕђ, маттур! Пур претçетаттĕлсем те çакăн пек ĕçлеме тытăнсан, ђăваш ђĕлхи такçанах вы-

рӑна кӗрсе лармалла. Вырӑнтан нихҫан та тухас ҫук та ҫав. Анҭах хӑшӗ-пӗрисем вырӑнтан кӑларса пурнӑҫа кӗртме тӑрӑшаҫҫӗ.

---

## ХӖРЛӖ САХӐР.

Пуйаӑ, пуйаӑ, пуйаӑ, пуйаӑ.
Пуйса ҫитсен пурте пулаӑ,
Пулаӑ, пулаӑ, пулаӑ, пулаӑ.
Тавар хакӗ ӳксе пыраӑ.

Ҫапла... пурте пулаӑ... пурте ӳкет. Тавар хакӗ ҫеҫ мар, таварӗ те ӳкет. Таварпа пӗрле ҫынсем те ӳкеҫҫӗ. Ҫапла вара, пурте ӳкет, пурте пулаӑ. Пулаӑ, пулаӑ, пурте пулаӑ.

Авалтанпах пирӗн пӗр йумах пур: тӗнҭе тӗрлӗ, кишӗр хӗрлӗ. Хаљ йумах—ҭӑн сӑмах. Тӗнҭе мар хаљ сахӑр та хӗрлӗ пулаӑ. Кун пек сахӑра мӗнле савӑтра тунине пӗлме пултараймастпӑр. Анҭах хӑш лавккара сутнине епӗр лайӑх пӗлетпӗр.

Йӳнӗ, хӗрлӗ, ҫитменне тата копперативтив лавккинҭе сутаҫҫӗ вӗт-ха! Ма илес мар?! Тавай, турттар мана ваљљи те!

Тиххӑн Кераҫҫӑмҭ Вӑрнарта илнӗ сахӑрне сӗтел ҫине хуҭӗ те:—карҭӑк, ҭасрах сӑмавар ларт-ха, питӗ те ӑш хыпаӑ, терӗ.

— Ман хамӑн та ӗҫес килет-ха, тесе арӑмӗ хыпаланса сӑмаварне ҭӗртсе йаҭӗ.

Тепӗр вунӑ-вун пилӗк минутран сӗтел хушшинҭе ҭей лепӗртеттерсе ҫеҫ лараҫҫӗ ҫавӑнӑҫлӑ ҫемйепе пурӑнакан савӑнӑҫлӑ ҭунсем.

— Ну, старик, кун пек сахӑр илнине те астумастӑп еп. Ытла та лайӑхҫке, тет арӑмӗ.

— Шутсӑр пылак, тесе йӑпатаӑ ҫумра ларакан аҭи те.

— Сӑмавар ытла та кӗрлет-ҫке, карҭӑк, хуп-ха.

— Темле хытӑ кӗрлет вӑл пайан, тет те хупса хураӑ сӑмавар виттине.

Сӑмаварне хупса лартнӑ пулсан та, сӑмаварӗ кӑсен хытӑран хытӑ кӗрленӗ пек илтӗнет. Арӑмӗ тӳсеймесӗр сӑмаварне уҫса тӑрпине пӑхаӑ, нимӗн те ҫук. Сивӗ сивех.

Анђах çаплах кĕрлет.

— Мĕн мурĕ кĕрлет? тесе хуђĕ арăмĕ пукан çине лак ларса.

— Атте, сан сăмсунтан йун кайат̆!

— Ђипер калаç. Хĕрлĕ сахăрпа ђей ĕçнĕрен, ахаљ хĕрлĕ тар йухат̆ пуљ.

— Ах, атте, пуç ыратат̆.

— Старик, ђирлетĕп пулĕ епĕ. Хăлхара темĕн йанăрат̆. Темле, вăй та пĕтсе çитрĕ, терĕ те арăмĕ, пукан çинђен йăванса та анђĕ.

Ађи сĕтел çине тăрăнса кайрĕ. Караççăмђ, хăй йăванса кайнă ђух, тискеррĕн кăшкăрса йађĕ.

Караççăмђ сассине илтсе, пĕр кӳршĕ арăмĕ ђупса каçат̆.

Виçĕ çын выртаççĕ. Тулли хăсăк. Çăварĕсенђен те, сăмсисенђен те йун тапат̆. Те пуснă, темĕн тунă.

— Са. Сахă-ă-ăр, тесе кăшкăрса йађĕ сĕтел хушшинђе выртакан ађи.

Арăм, сасартăк мĕнне ђухласа илсе, сĕтсемпе емелleме тапратрĕ.

Аран, аран сывалђĕç.

— Мат̆, мат̆, ку сахăрпа ĕçиђђен, матĕр мат̆!..

Кăларса пăрахас, старик.

— Çук. Усрас. Милитсийе хăналантарма кирлĕ. Пуçтарсах хурас.

— Килсен проккурорне те пырĕ, старик.

— Атте, вĕсем хăйсемех килме пĕлмĕç. Тавай çыру çырса йарар.

— Ђĕнмен хăна ăçтан килĕ. Çырах, ывăлăм, çыр!

— Милитси мĕн йатлă вăл, атте?

— Мĕн йатлă милитси—милитси йатлă ĕнтĕ вăл.

Çыраççĕ:

Йуратнă хăна милитси!..

Сире пирĕн пата хăнана ђĕнетпĕр.

Хĕрлĕ сахăрпа ђей ĕçтерме шутлатпăр. Сахăрĕ тутлă.

Ђыхăнса кайнипе епĕр пурте кайсах ӳкрĕмĕр.

Анђах сире ун пек сунмастпăр. Çавах та пулин килĕр-ха. Хамăр патран ђей ĕçме Вăрнара та кайса килĕпĕр. Унта та сире тахçантанпах кĕтеççĕ. Сывă пулăр. Ан манăр!

* * *

Пулат̆, пулат̆, пурте пулат̆.
Милитси те хăна пулат̆,
Шур хут çине актă çырат̆.
Актă тăрăх сут та пулат̆.
Пулат̆, пулат̆, пурте пулат̆.
Ей, ну, нимене,
Айăплине тĕрмене!

---

## МАКАР МАКАРЂ.

Макар Макарђ пĕр пуљнитсăра пĕр таттисĕр пĕр вунă çула йахăн ĕçлет. Ăна таврари халăх пурте паллат̆. Макар Макарђ, тесех ђĕнет.

Макар Макарђ авланман çын, станлă хвершшăл. Çавăнпа та вăл пуљнитсана пынă хĕрарăмсемпе пӳлĕмре ђылайах те пуплесе ларма йуратнă. Анђах пайан пĕр хĕрарăм та курăнман пулсан та—ват карђăксем, пиçĕкрех кусçлăскерсем çеç кĕре-кĕре тухнă. Кун каçиђђен вăл, пĕр илемлĕрех хĕрарăм курăнмасан, ĕçлеме пултарайман. Çавăнпа та вăл пайан кĕрхи çанталăк тĕслĕ ларнă.

— Кĕме йурат̆-и, Макар Макарђ?

— Кĕрĕр, кĕрĕр.

Çутă пушмаклă, шурă шупăрпа, пурçăн тутăрлă пĕр кĕрнеклĕ хĕр кĕрсе тăђĕ. Тутăр вĕçĕпе тутине хӳтленĕ, те вăтаннă пек пулса, нимĕн те ђĕнмест.

Макар Макарђ ку хĕртен хăй те вăтаннă пек пулђĕ. Анђах сасартăк кĕрхи сăнне пăрахса çурхи сăнпа улшăнђĕ. Хăйĕн кăтра çӳçне ĕнсе çинелле шăлса, çӳхе тутисене кулнă пек туса, сăмах пуçласа йађĕ.

— Килех, мĕн сăмахпа-ха хĕрĕм?

— Шăл.

— Сан пек илемлĕ хĕрсен те шăл ыратма пĕлет-и вара?

— Уйамаст̆ пуљ вăл.

— Хитре хĕрсен ыратмаст̆, теççĕ те.

— Хитрисен ыратмаст̆ пуљ те, еп хитре мар çав.

Хĕр Макар Макарђ хăш çулĕпе йуртнине те сисрĕ. Кайалла тухас шут та пур. Анђах шăла тӳрлетмелле. Макар Макарђ хăй çулĕпех йуртасшăн.

— Лар кунта ҫунӑм, ҫак пукан ҫине.

— Пуҫнитсана килнӗ ҫын ӑҫтан епӗ сан ҫуну пулма пултаратӑп?

— Ара, йуратса каларӑм вӗт епӗ ӑна.

— Йуратма сан тӑвану мар вӗт еп, пӑхса йар-ха ҫасрах.

— Йурат, йурат, ҫунӑм! Кӗпӳне хыв-ха еппин, пӑхса йарам.

— Шӑл ыратнипе кӗпе хывмаҫҫӗ пуҫ ӑна...

— Лайӑх итлесе пӑхмасӑр, хӑш шӑлӗ ыратнине пӗлме хӗн вӗт, ҫунӑм!

— Кайас пуҫ еппин.

— Ан кай-ха, ан кай. Ларах. Кӗпӳ тӳммисене ҫеҫ вӗсер.

Хӗр сасартӑк сиксе тӑрса алӑк хӑлӑпне тытат. Анҫах Макар Макарҫ хӑвӑрт ҫарса, каллех лартат.

— Хӑш шӑлӗ ыратат, ҫӑварна кар-ха еппин, хӗрӗм.

— Вӑл паллах, хуралнӑ та ӗнтӗ.

— Кӑларас пулат.

— Кӑларас ҫав.

Макар Макарҫ ку хӗрпе пуплесе ларнипе хӗвел ҫинҫи ҫу пекех пулҫӗ. Васкаса, шӑл кӑлармалли хӗскӗҫне илсе пыҫӗ те, хӗре ҫӑварне карма хушрӗ. Хӗскӗҫе хӗр ҫӑварне кӗртсенех, куҫӗсене хӗр куҫӗсем ҫине култарҫӗ. Хӗскӗҫӗпе хӗстерсе, тулалла туртма тытӑнҫӗ. Хӗр сасартӑк селӗппӗн кӑшкӑрса йарсан ҫеҫ, хӗр ҫӑварнелле пӑхрӗ. Хӗскӗҫӗ хӑрӑк, хура шӑл вырӑнне—хӗп-хӗрллӗ ҫӗлхене туртса кӑларнине курсан ҫеҫ, Макар Макарҫ йӑпӑшт! ҫемҫелсе темӗнле пулса кайрӗ.

— Ниҫҫево, ниҫҫево, хӗрӗм! Сарӑмсӑр пулҫӗ. Тӑпӑрах лар.

Каллех ӗҫлеме тытӑнҫӗ. Анҫах кайри хӑрӑк шӑл вырӑнне, малти ҫирӗп шӑлран ҫаклатрӗ.

— Ай, ай! Малти мар вӗт, кайарахри ыратат.

— Ниҫҫево, ниҫҫево. Сарӑмсӑр пулҫӗ.

Макар Макарҫ виҫҫӗмӗшӗнҫе сывӑ шӑлах туртса кӑларҫӗ.

Хӗр ҫухӑрса тухса тарҫӗ.

Макар Макарҫ, хӗскӗҫне пӑрахмасӑрах, кӑпшӑмпа тас йӑтса, хӗр ҫӑварне ҫӳкеме тухса ҫупрӗ.

Анҫах пусма ҫинҫе пӗр суккӑр карҫӑкран такӑнса ӳкнипе, хӑй сӑмсине катса пӑрахса, кайалла ҫавӑрӑнса кӗҫӗ.

* * *

Ултă кунтан Макар Макарђа, тухтăрпа пĕрле ĕçлеме, урăх пуљнитсана куçарђĕç. Сакăр тенкĕ шалу ђакарђĕç. Ун укçипе хĕре ылттăн шăл лартса памалла турĕç.

---

## КАÇĂР УÇĂП.

Йалта та çаплах ђĕнеççĕ ăна:—„Каçăр Уçăп", теççĕ.

Каçăр Уçăп вăл ђăнах та каçăр, вăрăм çын. Утнă ђух вара вăл йаланах пуçне каçăртса, кăкăрне мăкăртса çурхи хур аçи пек утаť.

Каçăр Уçăп пĕрре вăрмана кайнă. Лашипе пĕр тан утса пынă пулнă. Лаши нађартарахђĕ. Уçăп лашипе утса пынă вăхăтрах лашинђен иртнĕ кайнă, хăй те асăрхайман. Йала çитсе кĕнĕ ђух Уçăп:

— Но-о-о, утарах пар!—тесе çавăрăнса пăхнă.

Анђах Уçăпăн лаши ниçта та курăнман. Уçăп малалла утсан, лаши урăх çулпа уттарнă пулнă.

* * *

— Ес мана пайан ан çилентер, терĕ çĕнçул кунне ирхине Уçăп арăмне.

— Ăçтан калама пĕлетĕн кăна, ађам, терĕ арăмĕ Уçăпа хирĕç йăвашшăн.

— Ара, çĕнçул кунне çиленсен, çулталăкĕпех çиленсе пурăнаť теççĕ те...

— Е-е-е, каçăрма! терĕ арăмĕ çавăнтах асăрхамасăр.

— Каларăм вĕт анђах шуйттан карђăкне. Йарса тытсан пĕрре... Ťфу, ђорт!

Анђах Уçăп çавăнтах çĕнçул кунхине аса илђĕ те, арăмĕ çине сулахай куç хӳрипе пăхса:

— Ей, Ваççили атте, каçар! тесе хăй çине хĕрес хурса илђĕ.

Уçăп арăмĕ вĕтеленсе çеç çӳрет. Вăл пайан лайăх пĕлет: Уçăп алли ун çине ӳкмест, алăк патĕнђи ђăпăркка та уншăн вырăнтан хусканмаť.

— Пайан ман аттесем патне кайса килес-ха. Мĕн кунĕпех йăтса ларан пӳртре ку çĕнĕ кĕрĕке, ађам?— терĕ вăл Уçăпа сăмах майĕпе.

— Ҫĕнҫул кунне ҫĕнĕ кĕрĕкпе пулсан, ҫулталăкĕпе ҫĕнĕ кĕрекпе пулатӑ тет.

Пулĕ вăл, турă усала сиртĕр, терĕ арăмĕ хăш хуйхăрса.

— Мĕн, есĕ мана кивĕ кĕрĕкпе ҫӳретесшĕним тата!

— Ҫуктаха, ара...

— Шуйттан карђăкĕ, ан ҫилентер тенĕђђĕ.

— Ара пĕр ҫулне те сивђирпе ҫăвĕпех кĕрĕкпех ҫӳрерĕн те...

— Ху пуҫна пултăр. Ху пуҫ... Ах, турă, усала сир!

Уҫăп арăмне кашни сăмахрах урлă пыратӑ. Арăмĕ те хăрамасӑ пайанлăха. Мĕншĕн тесен ҫĕнҫул. Ҫĕнҫул кунне ăна Уҫăп „кай" тесе каласса кĕтмесĕрех, тухрĕ те утрĕ ашшĕсем патне.

Уҫăпăн ҫиленмелли таҫтан та тупăнатӑ. Хăйне хăй кĕвĕҫсе laратӑ.

— Шуйттан шăни, тесе ҫупса йађĕ хăйне хăй питҫăмартинђен, пырса ларнă шăнана ҫупас май.

— Мĕн кирлĕ сана, мĕн ман ҫине пăхан? терĕ ҫавăнтах урай варринђе утса пыракан хура кушакне.

— Кам ђуптаратӑ-ши кăна ку таранђђенех? тесе йулђĕ кантăк витĕр, урамра иртсе пыракан пĕр ҫуна ҫине пăхса.

Ирхине хутса ҫунтарнă кăмака хĕрӳленсе ҫитрĕ. Пĕђĕкрех кивĕ пӳрт мунђа пек вĕри. Уҫăп сарă-ҫĕнĕ кĕрĕкпе, пуҫра мулаххай-ҫĕлĕк. Мĕншĕн тесен... ҫĕнĕ ҫул.

— Никам килсе ђĕнекен ҫук.

Килте кунĕпе урса ларињђен, тухса утĕђђĕ Уҫăп пĕр-пĕр ҫĕре пĕр-ик курка сăрана. Анђах унтан мăшкăланă пекех, никам ђĕнекен ҫук.

— Хăпарса выртасђĕ кăмака ҫине, терĕ каллех урай варринђе йăваланса выртакан кушакне.

Кил алăкĕн сасси илтĕннĕ пек туйăнђĕ. Уҫăп пăђăртанарах ларђĕ.

— Ман килес, ăҫта кайма тапратнă тата Уҫăп пиђђе? терĕ пускил ађи Тихăн кĕрсе.

— Тапратнă сана...

— Атте пиђке пуҫлама ђĕнет те, мăнаккасем килнĕ. Халех пыр, тесе хăварђĕ.

Уҫăпăн ђĕри уҫăлсах кайрĕ. „Ĕҫес, ӳсĕр пулас, анђах никамран та пăрăнас мар. Мĕншен тесен" ҫĕнҫул, тет Уҫăп ăшĕнђе.

Тухрĕ те утрĕ пускиле пиҫке пуçлама. Килтен тухсанах курҫĕ—пĕр тимĕр-кăвак лашаллăскер хытах ҫуптарса анаҭ кунталла.

— Пăрăнас мар-ха. Çулталăкĕпех пăрăнмалла пулĕ. Хăй пăрăнса иртсе кайтăр манран. Мĕншĕн тесен...

— Ей-ей-ей, çул пар!

— Пайан мĕ... Ой-й!

„Пайан мĕн кун тесе кăласшăнҫҫĕ Уçăп. Анҫах унҫҫен те пулмарĕ: турта пуçĕ Уçăпа хулран сĕртĕнсе йур çине утса йарса хăварҫĕ. Уçăпăн сылтăм çаннийĕ йур çине тухса ӳкрĕ, турта пуçĕ ҭатса хăварҫĕ.

Кĕрĕкпе кайма çук. Кайса сăкман улăштарҫĕ. (Сивĕрех пулсан та, ҫăтас пулаҭ. Мĕншĕн тесен... çĕнçул!)

Курка хыççăн курка. Курка хыççăн курка. Сăмахран сăмах: тĕрлĕрен сăмах.

— Пайан çĕнçул, парăнма йурамасҭ, терĕ Уçăп сăмах май.

— Тĕрĕс, пуçна тата çӳлерех йат? терĕ Унтри мăшкăласа.

— Сана мĕн?

— Ара...

— Сана мĕн? Е... Кама... Сана мĕн?

— Çӳлерех çĕкле тетĕп.

Уçăппала Унтри тытăçса ӳкрĕç. Ҫармалла та мар кăсене. Уçăп ҫĕп-ҫĕрĕ йун пулҫĕ. Тула ҫупса тухрĕ.

— Ҫипер, Уçăп,—терĕ Унтри.

Анҫах унҫҫен те пулмарĕ, тултан кĕнĕ Уçăп йара паҫĕ Унтрийе куçран пĕр ҫăмăр патакпа. А, парăнма йурамасҭ вĕт! Мĕншĕн тесен... çĕнçул!

Уçăп килне тавăрăнсан паçăр тарăхтарнă кушакпа шăнана темĕн ҫухлĕ шырарĕ, анҫах ниçта та тупаймарĕ. Тупнă пулсан кăтартаҫҫĕ кăсене те пĕрре „çĕнçул“.

* * *

— Вставай, Уçăп Хветăрҫ!

— Сана мĕн кирлĕ? Е... Сана мĕн...

— Вставай, вставай!

Икĕ милитсионер Каçăр Уçăпа кăмака хыçĕнҫен туртса кăларҫĕç. Унта вăл хăйĕнҫен мăшкăланă шăнана шырама кĕнĕ пулнă. Анҫах çавăнтах çывăрса кайнă. Мĕншĕн тесен... çĕнçул!..

# МИКУЉ МУЂИ.

Микуљ муђипе Сопрани пиђђе çĕр валеçнĕ çĕрте, уйра хĕремесленсех йатлаçрĕç. Пĕр-пĕрне каламан сăмах хăвармарĕç.

— Каптăркана карђăкушăн та çĕр илсе йуласшăн. Вилес пулаť унăн, терĕ йулашкинђен Сопрани.

— Ху тата аçу кинĕпе пурăнса ађасем çăвăрласа тултартăн, терĕ Сопранийе Микуљ муђи.

— Есĕ мана ма намăслантаран халăх çинђех. Сута парсан—тыткалăп. Халăх, пул çвитетлĕ!

Микуљпа Сопрани йатлаçни кулăшла пек туйăнђĕ халăха. Халăх ахăлтатса кулса йађĕ.

— Аçу кинĕпе пурăнмасан, кам кинĕпе пурăнан тата есĕ? Сан арăму аçун кинĕ пулаť ĕнтĕ вăл, терĕ хура Йăван Карађăмĕ Сопранийе.

Ку вăхăтра Микуљ муђи уйăрăлса уттарђĕ килелле. Анђах Сопрани сута парасран хăратех ун ђĕри: пусас мар урана урăх çĕре пустараť.

— Хурах, Микуљ Муђи! тенĕ сасă илтĕнђĕ таçтан.

Ним çавăрăнса пăхмасăр вĕçтерђĕ Микуљ муђи малалла. Сопрани хăвалаť терĕ пулмалла. Шăп çитсе тухрĕ çырма пуçне, курăнах кайрĕ ун куçне пĕр хĕрарăмпа арçын. Ни малалла, ни кайалла, мĕнле куçа хупмалла.

— Хурах, Микуљ муђи, тархасшăн çăл! тесе кăшкăрђĕ хĕрарăмĕ.

Арçын мулкађ пек вĕçтерђĕ çырма тăрăх анаталла. Микуљ муђи те пăхкаларĕ унталла та кунталла, вашкăртĕ вăл та йалалла.

Палларĕ вăл Саңука, унпа пĕрле Ваңука. Çирĕп тытрĕ сăмаха, хăй ăшĕнђе сыхласа. Каламарĕ карђăкне: мĕнмĕн пулса иртнине. Анђах кайран ђăтаймарĕ, пĕр каçхине каларĕ.

— Ку сăмаха, ађам никама та ан калах. Сăмах сарăлсан, Саңукне лайăх мар, терĕ карђăкĕ.

*
* *

— Сан ытлари кун сута каймалла, Микуљ муђи тесе хут тыттарса хăварђĕ пĕр каçхине исполниттĕл Ваçça.

Микуљ муђин аллинђи улми лађах турĕ сĕтел айне.

— Ђăнах та пађĕ пулаť ĕнтĕ ку сута, ђĕр есрел, терĕ Мукуљ муђи йăвăç ђашăк çинђен тепĕр улмине илсе шуратса.

— Мĕн хăтланса çӳренĕ вара есĕ, старик, ват пуçупа, терĕ карђăкĕ тĕлĕнсе.

— Мĕн хăтланса... Нимех те мар. Вăл хăй мана: вилес патне çитнĕ карђăкушăн та çĕр илетĕн, терĕ.

— Кам ара...

— Сопрани есрелĕ.

— Çĕр çăттăр ун пуçне, ађа ђĕрисĕр йултăр, тесе хĕрес хывса илђĕ карђăкĕ тарăхса.

— Ђăнах, хăй тапратаť, хăй сута параť, намăссăр.

— Сутра хăйне хуптармалла туса хăвар, старик.

— Конешнă, мĕн пире ват çынсене кураймасť вăл? терĕ Микуљ, карђăкĕ кăмăлне çавăрса.

*

* *

Ытлари кун. Сут кунĕ. Сут пӳртĕнђе тулли халăх.

— Ес Микуљ муђи, мĕн пулнине пĕтĕмпех каласа пар вара, терĕ Микуљ патне пĕр çамрăк хĕр пырса. Анђах çавăнтах, вĕлт çеç турĕ. Микуљ муђи палласа та йулаймарĕ.

— Кам арăмĕ пулђĕ ку? терĕ мăкăртатса. Йĕри тавра пăхкалаť, анђах Сопрани курăнмасť.

— Микулай Микулайђă!

— Йа!—терĕ Микуљ муђи салтакла.

— Тула тух-ха есĕ халђ. Вара ђĕнетпĕр, терĕç сутран.

— Сопранийĕ унта кĕрсе ларнă пулĕç, терĕ хăй ăшĕнђе Микуљ муђи. Епĕ укçа парса тытнă ваккатне те вăл ђӳкленĕ пулмалла. Халђ те килмест. Пĕр така ахалђ сайа кайрĕ. Пĕтерђĕ ку Сопрани есрелĕ, тесе вăрăм пит туса лараť Микуљ муђи.

Микуљ муђи сутпа Сопрани айне пулас мар тесе, ваккат та тытнăђђĕ пĕлтерӳне илсен тепĕр куннех. Ваккатне укçа та, така та панăђђĕ. Анђах пайан ни ваккађĕ, ни Сопранийĕ курăнмасť. Çавăнпа та вăл сут çине те шансах каймасť.

— Микулай Микулайђă! тесе кăшкăрђĕç сутран.

— Йа, еп пайан ку сута тутармастăп. Ни Сопрани, ни ваккађĕ килмен, терĕ Микуљ муђи хăвăрт, салтак раппăрт панă пек.—Саккунне пĕлетĕп епĕ: вĕсемсĕр сут тума йурамасť. Çук, çук памастăп, терĕ каллех пуçне силлесе.

— Мĕнле Сопрани çинђен калатăн есĕ!
— Ара, мана сута пани çинђен.
— Сана вăл сута паман. Сана Александтрă Кирилăвă çвитеттĕле ђĕнтернĕ. Ун ĕçĕ çинђен мĕн пĕлетĕн есĕ?
— Ара, пĕлетĕп пуљ.
— Есĕ курнă ђухне, мĕнлеђђĕ вĕсем?
— Çапла пуљ ара, çаплах пуљ.
— Мĕнле çаплах пуљ?
— Ара, епĕ курман, мĕн çинђен вăл?
— Ăна Лешкас кађђи тапăннă.
— Тапăннă пуљ ара, тапăннă пуљ.
— Ес курни ăна?
— Курман.
— Тӳррипе кала, атту хăна хупатпăр.
— Çапла пуљ ара, çапла пуљ, ывăлăмсем.

Сутра ларакансем Микуљ муђийе мĕн тĕрлĕ паркаламарĕç. Микуљ муђи „арапа“ „пуљсăр“ пуçне нимĕн те каламасť. Карђăкĕ пĕр каçне Сањук çинђен никама та калама каламанђђĕ вĕт-ха ăна! Çавă çĕмĕрет пулмалла ĕнтĕ ун пуçне.
— Есĕ ун ђухне унта пулни?
— Пулнă пуљ ара, пулнă пуљ.
— Есĕ курнă еппин.
— Курман ывăлăмсем.

Сут сĕтелĕ хушшинђе ларакансем темĕн вăрттăн пăшăлтатса илђĕç.
— Сана Миколай Миколайђ, сут аллине илмелле турăмăр сутра суйнăшăн.
— Çапла пуљ ара, çапла пуљ.
— Çакăнти пукан çине килсе лар, милитси çумне.
— Ара паçăрах лармаллађђĕ, ывăнтăм тăрса, ывăлăмсем! Спаççипă-ха сире, ывăлăмсем!

Сут сĕтелĕ пушансах йулђĕ. Сут канашлăва кĕђĕ. Микуљ муђи милитсирен вăраххăн:
— Мана кайма та йураť пуљ, тесе ыйтрĕ.
— Йурамасť, терĕ милитси пĕр сăмахпа.
— Çапла пуљ ара, çапла пуљ.

Сут тухса прикăвăр вуласа пађĕ.
— Сана сутра тĕрĕс каламаншăн пĕр çул тĕрмере усрамалла турăмăр!..
— Çапла пуљ ара, çапла пуљ.
— Айта муђи, терĕ милитси.

* * *

— Кӗр ҫак алӑкран, терӗ милитси, тӗрме алӑкӗ умне ҫитсен.

— Мӗншӗн ара...

— Кӗр, кӗр, кӗр!

— Ҫапла пуљ, ара...

Микуљ муђин куҫҫулӗсем шапӑртатса анђӗҫ. Тутисем ҫӗр мулкађӗн тутисем пек мӑкӑлтетсе илђӗҫ.

— Кађђи тарђӗ вӑл ҫырма тӑрӑх анаталла, терӗ йулашкинђен милитсийе, тӗрме алӑкӗнђен кӗнӗ ђух Микуљ муђи...

---

## ПИЂЕТ.

— Халӑх ҫине, халӑх ҫине!..—урам тӑрӑх хӑпарђӗ хурал пӳрттелле Арпус Хӗритунӗ.

Арпус Хӗритунӗ теҫетникређђӗ ун ђух малти урамра. Йалта ултӑ теҫетник. Пурте ђӳређерен шаккаса халӑх ҫине йӑхӑрађђӗҫ.

Пӗр Арпус Хӗритунӗ ҫеҫ никам патне те пымасђӗ, урам тӑрӑх ҫеҫ кӑшкӑрса тухађђӗ. Унӑн уҫӑ сасси йал ҫине йанах кайађђӗ.

— Кам хушнӑ сана, мӗн халӑхӗ? терӗ урама ђупса тухса Миљук старӑстӑ.

— Хушнӑ!.. терӗ те, уттарђӗ Хӗритун малалла.

— Камра пиђет, кам хушнӑ? тесе йулђӗ Миљук.

Арпус Хӗритунӗн сасси ун хӑлхишӗн татах та хытӑрах илтӗнме тытӑнђӗ.

— Халӑх ҫине ђасрах, халӑх!

— Кам хушнӑ сана, кам... е?!. Хурсан пӗрре туйапа. Кам йалта претҫетаттӗл? терӗ ҫул ҫинђе хирӗҫ пулса йалсовет претҫетаттӗлӗ, Ухтерке Ӗлӗкҫи Танилийӗ.

— Халӑх ҫине, халӑх!..—уттарђӗ Хӗритун малалла.

Ђӑнах та, кам хушнӑ-ши Хӗритуна халӑх хӑвалама. Ун ҫинђен ун ђухне те, хаљ те, ӗмӗр ӗмӗрех никам та пӗлмест. Пӗр мӑшкӑлӗ тен ӑна выљатса калана пуљ, пӗлме ҫук. Мӗншӗн тесен Хӗритун питӗ те выљатађђӗ, мӑн ҫынпа та, ађапа та пӗр пекђӗ. Ҫавӑнпа та вӑл пӗрре урампа иртсе пыракан пӗр пӗђӗкҫӗ ађа каласа хӑварнипех пулни халӑх хӑваласа панӑ. Хаљ те ҫавӑн пекех пулма пултарнӑ. Анђах, пухӑннӑ халӑх пысӑк

ĕçех туса хуҫĕ. Иалта икĕ пуçлăх: старăстă, претçетаттĕл. Миҫук старăстă йалта хăйне пуçлăх тесе шутлаҫҫĕ. Кирек йепле хут çине те „алпусатăп" тенĕ хыççăн, кăранташ илсе сулахай аллипе пысăк хĕрес хураҫҫĕ. Унтан старăстăн тимĕр пиҫетне трупасăр ламппă çинҫе пĕçерекен пулиҫҫен тытса тăраҫҫĕ. Кайран вара таса хут çине, хĕрес хунă вырăна, хăйĕн пиҫеҫĕпе кушак урипе варланă пек тăваҫҫĕ.

Ухтеркке Ĕлĕкçи Танилийĕ—претçетаттĕл. Вăл пăртак „крамăтнăй" пулнă. Çавăнпа та, кирек мĕнле хут çырас пулсан та, вăл çырнă. Малтан хăй алпусса, старăстă ваҫҫи хĕрес хума вырăн кăтартса, пиҫет пусма йанă. Старăстă пиҫеҫĕсĕр кирек мĕнле хут та „не тействиттĕлнăй" пулнă.

*
* *

— Пиҫет кам аллинҫе? Мансăр пуçне есĕ халăх хăвалаттарма пултаратни, е?.. Кала халăх куç умĕнҫе намăссăр! Кам хуçа йалта, е?..—çĕмĕрет старăстă претçетаттĕле.

— Кам хуçа?! Епĕ! Епĕ претçетаттĕл. Хутсем çине еп алпусатăп. Кам пултăр? Ман алă, сан пиҫет.

— Туттă ман пиҫет, сан мар. Илĕттĕнҫҫĕ те, памăп.

— Мĕнле памăн...

— Епĕ хаҫ икĕ çул çеç çӳренĕ старăстăра, ман тата тепĕр çул çӳремелле.

— Çирĕм çул çӳре, пиҫете пар!

— Сана-и? Сана параҫҫен...

— Пар!..

— Кай!..

— Пар!..

Пӳрт тулли халăх нимне пĕлмесĕр ларать. Такам майлă пулмалла? Иккĕшĕ те лайăх çын. Анҫах уйрăм вĕсен ҫын. Çавăншăн çеç вăрçаççĕ. Пĕрне-пĕри сураççĕ.

— Хĕритун, терĕ йавашшăн Миҫук.

— Еп кунта, Миҫук пиҫҫе!

— Илсе тухса кай-ха çак Танилене.

— Еп...

— Хĕритун, илсе тух-ха çав Миҫука, терĕ Таниле çинçе сассине вăрăм ҫăсса. Вăрăм çинçе кĕлетки купташка пек пулса илҫĕ.

— Тыт, Хĕритун...

— Тыт, Хĕритун...

Миђукпала Таниле Хĕритуна ĕшкĕртеççĕ. Тула тытса кăларма ĕслетеç те ĕслетеç. Анђах кама тытса пухмалла, кама пођђот тумалла? пĕлмест Хĕритун; ара, мĕн ĕç ун. Халăх шавлаť, хăшĕ-пĕри савăнаť.

— Шăпа йарăр-ха еппин, Миђук пиђђе! Шăпа кама тухаť, йалта çав пуçлăх пулаť, терĕ Хĕритун хĕрелсе, хул пуççине ђĕтретсе.

— Тавай, тавай, –терĕ халăх те кĕрлесе, ĕç пĕтессе йĕрлесе.

— Тавай, терĕ Таниле.

— Тавай, терĕ Миђук та.

Тăвать хутђен йађĕç: иккĕ Танилене, иккĕ Миђука тухрĕ.

— Тепĕр çын хушас! терĕ халăх.

— Тыт, Танши.

Таниле, Миђук, Танши Çтаппан тытрĕç шăпа. Камăн телей—çавна шăпа! Шăпа тухрĕ Таншийе, Миђук ĕнтĕ ан çилен.

— Танши претçетаттĕл, терĕ халăх.

— Ун пек сĕтĕрĕнђĕке пиђет памастăп, терĕ Миђук.

— Сăпаççипă, тасалтăм, терĕ Таниле.

— Сăпаççипă, халăх, терĕ Танши те.

Миђук пиђетне ун ђухнех памарĕ. Танши ун патне çирĕм виççĕ çитсен, çур çултан, пуçĕнђен персе пană, тетђĕç.

* * *

— Танши шăпана хутшăнман пулсан, пайан кун та епĕ старăстăђђĕ... Пайан кун та пиђет кĕсйерех йулађђĕ, ахăраť, терĕ пĕлтĕр шăматкун пасара кайнă ђух Миђук.

— Пурăнсан кĕрейĕпĕри-ха, пиђет шалккă, пиђет лайăхђĕ, терĕ кăптăрт такăнса.

---

## СЙЕС ХУПĂННИ.

4-мĕш кун. Каç. Сехетĕн вăхăт виçекен йĕппи, вунпĕртен пăрăнса, вуниккĕ çинелле йăпшăнаť.

Хыçаларах ларакансем хăшĕ-пĕрисем, пăђăланса çитнĕ сывлăша сăварĕсене карса, сăмси шăтăкĕсем ви-

тӗр туртаççӗ. Паллах: пуçӗсем хулпуççийӗсем çине тӗкӗленнӗ, йе йанахӗсем кӑкӑрӗсем çине пулса, паçӑрах хупӑннӑ куçӗсем хырӑмӗсем çине пӑхаççӗ. Ӗне тутлӑ апат çинӗ хыççӑнхи пек, тутисенђен кӑкӑрӗсем çинелле çутӑ ђӗнтӗрсем тӑсӑлаççӗ.

Лайӑх лашасем пек, хушӑран-хушӑран сӑмсипе хартлатса илекенсем те пур.

Çӗнӗрен суйланса йулакансене сасӑлама тытӑнђӗç.

— Кам çак Ваççилйӗв йулташшӑн? Тет преçитиум претçетаттӗлӗ.

— Пӗрре, иккӗ... Вуниккӗ!

— Кам хирӗç?

— Пӗрре... Пӗрре çеç!...

— Кам сасӑламасӑ̆?

— Сасӑламанни пӗрре те çук, тет мантат комиççи ђленӗ·

— Йулташсем, капла пирӗн ӗç тухмасӑ̆, терӗ претçетаттӗл.

— Сйесра 27 çын. Сасӑ паракансем пӗтӗмпе 13 çын, ыттисем ни сасӑ... ни...

— 12 сехет çитет вӗт, йулташ претçетаттӗл.

— Сатто йулашки ыйту.

— Çывраççӗ, терӗ пӗри ђӑтаймасӑр.

— Апла йурамасӑ̆ ӗнтӗ вӑл. Сйес тӑк—сйес пулмалла. Çывӑрма вӑхӑт ыран та тупмалла, терӗ претçетаттӗл хӑйуллӑн.

Тапратрӗç пукансем йӑслама, йулташсем пӗр-пӗрне вӑратма.

— Иванов, вставай!

— Е-е?

— Вставай?

— Вӑран.

— Ыран?..

— Тӑр тетӗп.

— Тӑр-р, çивккӑ!

Йӑвӑр ӑйха кайнӑ сйес телекађӗсене нийепле те вӑратса çитермелле мар. Вӑратнӑ, çӗртех, каллех çывӑрса кайаççӗ. Телӗкре çеç савӑнаççӗ.

— Ђурӑ, кил-ха ђуптӑвам, терӗ пӗри тӗлӗрсе пурне те илтмелле сасӑпах.

— Ваңӑ, вставай, терӗ çывӑрман йулташӗ айакаран тӗксе.

— Нет не... потселуй.. токта... терĕ каллех лешĕ.

Сехет йĕппи пĕрре патне шăвăнать. Сиес халăхĕ йалтах ывăнать. Анђах сиес пĕтместь. Пуçлăхăн йулашки сăмахĕ икĕ сехете çывхарать.

— Самокриттĕккă, товаришђи!..

„Само" çырса хуђĕ çекрĕттарĕ. Алли шăнăрĕ шанса, шăкăрт ўкрĕ кăранташĕ шур хут çине.

— Самосопой расумейăтсă...

„Сопой" çырса хуђĕ тепĕр çекреттарĕ, йулташĕ умĕнђе выртакан хута илсе.

— Тыккăв тоше оправтăн... тет претçетаттĕл сасси.

„Ты" тесе хуђĕ çурри çывăрнă иккĕмĕш çекреттарĕ. Тыккăв тесе çырма тытăннăђђĕ вăл.

— Релики—йеçт турман!.. тет хăйĕн йулашки сăмахĕнђе пуçлăх.

„Дурман" тесе çырса хуђĕ çывăрнă çекреттарсем умĕнђе выртакан хута илсе преçитиумăн пĕр ђленĕ. Ку, вырăс пулнă та, вырăслах çырса хуђĕ.

4-мĕш сехетре сиес хупăнђĕ. Сал йанрама тытăнђĕ. Интернатсионал пуçларĕç.

„Вилиђђен çапăçма хатĕр"...

— Ман çуким ал, ман çуким? Сасартăк вăраннă Иванов хуђĕ ĕнсерен пĕрре паспа йурласа тăракан Петрова.

— Ђто ты?..

„Çав пуç касакан йытăсемшĕн"...

— Кам йытти вăл? Вĕлерес, тәрĕ кайри пукан çинђе çывăракансенђен пĕри вăранса.

„Хăрушă аслати авăтсан"...

— Тырă лайăх пулать... тесе урине малалла ђăсрĕ трипунă хыçĕнђе ларакан пĕр çекреттарĕ.

Сиес хупăннă хыççăн 24 телекат тухса утрĕç. Анђах виççĕшĕ тапранмарĕç нимĕн те. Мĕншĕн тесен вĕсем ыттисенђен йăвăртарах ăйхăллă пулнă. Сиес вара çапла хупăннă.

---

## ХĔРИТУН.

— Пета ку арăмпа. Хĕрарăм—хĕрарăмах ĕнтĕ вăл, çавна та çавăрса илмен: кам хушнă-ха ăна ку вăхăтра çăмăлланма?! Ку пылђăкра мĕнле кайасха ун патне?

Неушлĕ ҫавна та ҫавăрса илме пĕлмест. Ах, равноправи, теҫҫĕ тата ахаљ ђухне. Рас, ҫăмăлланмалли вăхăт ҫитсен, пĕр виҫĕ уйăх та ђăтма пултарайман йапала, мĕн равноправийĕ ҫинђен калаҫмалли пур. Арҫын ĕмĕр-ĕмĕр ҫăмăлланмасăр ђăтма пултарат̆, хĕрарăм пур—патне ҫитсен пĕр виҫĕ уйăх та ђăтма пултараймаст̆. А-ах, равноправи!..

Шупашкарти уђрештенисенђен пĕринђе слушит тăвакан Хĕритун, килти арăмĕнђен ҫыру илнĕ хыҫҫăн, хăйĕн пĕђĕк пӳлĕмĕнђе каллĕ-маллĕ уткаласа вăрҫса ҫӳрет. Ђуспа сарнă урайĕ—вăнкки-вăнкки авăнат̆. Сĕтел ҫинђи ђернилĕ - пыл сăра пек тăкăнат̆.

— Пушă мăй, пат̆т̆ушки, Хĕритун! мĕн пулнă ара сана?.. тесе кăшкăрса ӳкрĕ Хĕритунăн хулари хура куҫлă вăрăм арăмĕ, ҫав вăхăтра пӳлĕме пырса кĕрсе.

— Та, ђорт воҫми! Арăмăн ҫăмăлланас вăхăт ҫитнĕ.

— Ара, мĕн ухмахланатăн ес, Хĕритун. Ăҫта-ха ман ҫăмăлланас вăхăт, хаљ пилĕк уйăх тултарман вĕт.

— Санăн та ҫире пур-и?

— Тата ес кам ҫинђен?..

Ку сăмахсем хыҫҫăн Хĕритунăн ђĕри хăрăк шанкă пекех, шартах хуҫăлђĕ. Пĕр арăмĕ—хаљ ҫăмăлланат̆, тепри—хатĕрленсе тăрат̆. Пуҫа ăҫта кайса ђикес, вăт тамаша!

Хулари арăмĕ Хĕритунпа пĕрлех пурăнман, йершнĕ хушăра, кирлĕ ĕҫсемпе ҫеҫ пĕр-пĕрин патне ҫӳренĕ. Ҫавăнпă та, хаљ те, хулари арăмĕ Хĕритун патĕнђе нумайах лармарĕ, тухса уттарђе хăйĕн килнелле. Анђах ђĕре сисет пуљ ҫав—макăрсах тухса кайрĕ.

Арăмсем ҫинђен шутласа Хĕритун ҫĕрĕпе ҫывăраймарĕ. Пурне те йуратат̆, пĕрне те йуратмаст̆. Ирхине кайăк ыйхипе ҫывăрса кайсан ҫеҫ унăн хуйăхĕ лăпланђĕ.

* * *

— Манăн киле кайса кимелле те, тет пуҫлăхĕ патне кĕрсе Хĕритун тепĕр ирхине.

— Каймастăн.

— Арăмăн кăмаки йăтăнса анма тапратнă та.

— Арăму хăй йусат̆.

— Арăмăн йăтăнса анат̆ ҫав.

— Ну, вӗом телӑ? Йусат хӑй. Манӑн та аннен йӑтӑнса анма тапратнӑ та, вара ман кӑмака йусасшӑнах киле кайас-и? Йусатӑр хӑй...

— Сан аннӳ миҫе ҫулта?

— 74-ра.

— Хӗрарӑм кӑмаки 74 ҫула ҫитсен йӑтӑнмасӑ вара вӑл.

Иккӗн икӗ кӑмака ҫинӗен пуплерӗҫ. Анӗах пуҫлӑх Хӗритунӑн йуптаруллӑ сӑмахӗсене тытаймарӗ. Ҫавах та пулин тӑватӑ кунлӑха отпуска йаӗӗ.

* * *

Хӗритун тепӗр кунхи каҫхине киле ҫитрӗ. Мӑн хӑлхаллӑ ула йӑтӑ хирӗҫ тухса илӗӗ: те хӗпӗртесе, савӑнса —хӳрипеле сӗртӗнӗӗ, унтан Хӗритун ҫине пӑхса—ҫын сассипе вӑл йӗӗӗ. Хушка пуҫлӑ турӑ лаши—витеренех палларӗ.

Урӑх сасӑ пулмарӗ, Хӗритуна ӗысласа, арӑм хирӗҫ тухмарӗ.

— Х-ху, ты, ӗорт, неушелӗ килте ҫук.

Пӳрт алӑкӗ тулалла, туртрӗ кӑна туртмаллах. Анӗах хӑнк та сикмерӗ, пӳртрен никам ӗӗнмерӗ.

— Уҫ-ха, карӗӑк. Ҫывратним?

— Кам унта?

— Ара епӗ, Хӗритун.

— Арӑму аптраса ҫитнӗ. Кунта кӗме йурамасӑ, пус килелле кайса ларӑр-ха пӑртак, тӗрӗ Хӗритуна кӑтра пуҫлӑ кушшеркка хирӗҫ тухса.

Усал тӗлӗк такама та хӑратӗ. Вырӑн ҫинӗен тӑнипе пӗрлех Хӗритун вашкӑртрӗ кӳршӗрен килнелле.

— Пулмасӑ, вилетех пуӗ санӑн арӑму, хаӗ те ҫӑмӑлланмасӑ, терӗ каллех кушшеркка хирӗҫ тухса.

— Х-ху, ты, мошет тепӗр виҫ уйӑха ӗӑтма та пултарат?

— Што вы, пайан ҫӑмӑлланмасан, пурӑнма та пултараймасӑ.

— Йар-ха, кӗрес еппин, каласмалли пур.

— Йурамасӑ.

— Х-ху, ты, ман отпуск вӑхӑӗӗ пӗтет, курмасӑрах кайатӑп вӗт. Кӗрсе кала-ха еппин, еп тепре отпуска килиӗӗен тӑхтатӑр, ан ҫӑмӑллантӑр.

Кушшерккăшăн Хĕритун ухмах çын пекех туйăнђĕ. Сыпнă ку, тесе шутларĕ.

Хĕритун пускилтен кун каçиђђен темиçе хутђен те ђупа-ђупа каçрĕ.

— Ђăтаймаст, тепĕр 20 минут, 10 минут, 5 минут. Ђăтаймаст, вилетех, тесе хăратса йарат Хĕритуна йаланах кушшерккă.

Хĕритун отпускĕ виçĕ кун çине кайрĕ. Анђах арăма курман, арăм çăмăлланман. Виççĕмĕш кунхине Хĕритун йулашки шухăшпа пырат.

— Пулђĕ, терĕ кушшерккă, хирĕç тухса йăвашшăн.

— Пулђĕ...

Урăх сăмах вакламарĕç.—Ех, тĕкĕннĕ пурăнăç. Ма килтĕм, килмен пулсан тен тепĕр виçĕ уйăх та пурăнађђĕ пуђ, терĕ те Хĕритун, уттарђĕ тӳрех йалсоветне арăмĕ вилни çинђен хут çыртарма.

— Пулнă та пулнă, çырса парăр-ха еппин.

— Сарăмсăр вилнине епĕр çырма пултараймастпăр.

— Сан малтан тухтăра, йе милитсийе йевит тумалла, терĕ Хĕритуна йалсовет çыруçĕ.

Мĕн тăвас ĕппин? Йурамаст тăк, йурамаст. Хĕритун йалсоветĕнђен киле таврăнђĕ те, пӳрте кĕмесĕрех хушка турă лашана утланса вĕçтерђĕ милитси патне, арăмĕ вилни çинђен йевитлеме.

— Лиђук ђăтаймарĕ, тесе хăварђĕ Хĕритун йал хĕррингђе ларакан хуннĕне кантăк витĕрех.

— Тата ес ăçта кайатăн?

— Милитсийе.

— Е-е, шуйттан комуниссем, вилсен те çынна милитсисемпе ђăрмантаратăр, тесе вăрçса йулђĕ хуннĕ те кантăк витĕрех.

* * *

Хĕритун пуйан мар, саппасра тăракан хăма мĕн çук. Çавăнпа та хунĕ Хĕритун курăнми пулиђђенех тула тухса лашине кӳлсе те худĕ. Вилнĕ çынна пытарасах пулат вĕт, темĕн ђухлĕ йурататăн пулин те, хамăр патăрта усрама çук. Хĕритун хунĕ тупăк тума хăмасем тийерĕ те, шакăлтаттарђĕ хыçалти урампа анаталла, хĕрĕ вађђи тупăк тутарма. Хăмасене лупасайне тăкрĕ те, пускилсене, хурăнташсене тупăк тума ђĕнме кайрĕ.

Пӳрте кӗрсе те пӑхмарӗ. Ара, мӗнле кӗрен унта, тискер вилӗмпе вилнӗ вӗт, аҫа ҫуратнӑ ҫух!

— Пулнӑ та пулнӑ ӗнтӗ, ҫӗртсе тӑратма ҫук. Пырса тупӑк туса паратӑр пуҫ, терӗ Хӗритунпа йунашар пурӑнакан Кришка патне каҫса.

— Кам ваҫҫи ара? тесе хӑраса ӳкре Кришка.

— Ара Лиҫук ваҫҫи.

— Лиҫук кин паҫӑр ҫеҫ кантӑк умӗнҫе лараҫҫӗҫке, унпала пӗрле пӗр майра пурҫҫӗ.

— Ес ӗнерхине астӑватӑн пуҫ, Кришка! Айта, туса парӑрах ӗнтӗ.

Кӑнтӑрла ҫитнӗ ҫӗре тупӑка туса та пӗтерме пуҫларӗҫ.

Кушшеркка тула тухсан, сарайӗнҫе (лупасайӗ) темӗн ӗҫленине ҫылайҫҫен пӑхса тӑҫӗ. Пӳрте кӗрсен Лиҫука та каласа кӑтартрӗ. Анҫах тахҫантанпах лар тутарасшӑн антӑраса пурӑннӑ Лиҫук тупӑк ҫинҫен аса та илмест.

— Ах, спаҫҫипах ку лара тутарса хӑварнӑшӑн, тесе ҫеҫ савӑнса ларӑ.

Хӗритун хунӗ тийеҫукпа киле пырса кӗҫӗ. Сарайне тӳрех утса пырса, туса пӗтернӗ хӗресе ҫӗклесе хапха умне, урам йенне тухса тӑратрӗ.

Унтан псалттыр вулама пынӑ тийеҫукпа пӳрт алӑкне йар! уҫса йаҫӗҫ.

— Ҫветтуй турӑ, ҫветтуй хӑват...

Тийеҫук ҫавӑнтах вырӑн ҫинелле ҫавӑрӑнса анҫӗ. Вӑл „вилнӗ“ Лиҫука курнӑ иккен.

— Вилмесӗрех пытаратпӑрӗҫ, ей-ай-ай, терӗ „вилнӗ“ хӗрне курсан Хӗритун хунӗ.

Ку вӑхӑтрах тупӑка туса пӗтерсе, пӳрте йатса кӗҫӗҫ. Лиҫукӑн ахаҫ те вӑйӗ пӗтнӗскер, тупӑка курсан, ҫавӑнтах татӑлса анҫӗ. Шавлама тытӑнҫӗҫ. Тупӑка кай пуҫӗнҫен йатса кӗрекен Кришка, Лиҫук мӗнле ӳкнине курайманскер:

— Ан хӑрӑр, хӑш виле ахаҫ ҫавӑн пек пулаҫ, виле шӑнӑрӗ туртаҫ ӑна, тет.

Ку хушӑра тийеҫук мӗнле тухса тарнине никам та курман. Псалттир кенеки те урайне выртса йулнӑ.

Лиҫука вырӑн ҫине илсе хурса тӑна кӗртрӗҫ. Кун хыҫҫӑн пытарма пынӑ ҫынсем пӗрерӗн-пӗрерӗн саланса пӗтрӗҫ. Тупӑкне: „Ватса ҫунтарас“, терӗҫ. Анҫах Лиҫук асӑнмалӑх ҫӑнӑх хумалли пултӑр, тесе кӗлете хуртарҫӗ.

* * *

„Пайан арăма пытаратăп, пĕр-ик куна кайа йулатăп“, тесе телефонокрам шаплаттарђĕ Хĕритун, района çитнипе пĕрлех, хăйĕн Шупашкарти уђрештенине. Хĕритунăн Шупашкарти йулташĕсем пăшăлтата-пăшăлтатах Хĕритуна хĕрхенсе илђĕç. Упăшкисĕр пурăнакан сторошихă вăл кун пилĕк хут супăњпе çăвăнђĕ, тет; йулашкинђен кивçен укçа илсех, пите сĕрмелли çăнăх кайса илсе, кун каçиђђенех сĕрĕнсе ларса, мелник тĕслĕ пулђĕ, тет.

Районра та Хĕритуна питĕ хĕрхенђĕç. Çитмелли çĕре çитсе çапăнса çўрерĕ те, Хĕритун каçа хирĕç асл̆ă милитсипе тухтăра йамшăк лаши çинех лартса тухрĕ. Хăй йуналутпа вĕçтерет малтан, пĕр пар хура лаша ыткăнат̆ кайран. Йурлă шыв, пылђăк çăлтăрла çăват̆, кĕрхи сивĕ çумăр пит-куçа çапат̆. Урапа йĕрри те йулмаст̆. Каç пулђĕ. Тĕттĕм, ђиксе те курăнмаст̆.

Çитсе кĕђĕç Хĕритун килне.

— Лиђа, еси ку.. терĕ тĕлĕнсе Хĕритун пўрте кĕрсен.

— Шупашкарти терĕн-им тата?

— Ара, мĕнле капла?

— Çаплах, есĕ тепре авланарасран хăраса, каллех ђĕрĕлтĕм вĕт!

Çапла вĕлерсе ђĕртрĕ вара Хĕритун хăйĕн арăмне. Ахалех вăтăр пус расхут турĕ уђрештенири тăлăх арăма.

Кушшерккăн „пулђĕ“ тенĕ сăмахĕ—вилнине пĕлтермен, çăмăлланнине пĕлтернĕ пулнă.

---

## СЫПĂКСĂР УНКĂ.

Пирĕн йалта Арпус Ваçлейĕ пулнă. Ăна пурте „Арпус“ тесе ђĕннĕ. Вăт тамаша! Харпăрхăй йађĕ пур çинђенех таçтан, муртан тийĕсе килекен Арпус йатне илтес пулат̆. Путлĕ йапала-им? Ăшне çи те, хуппи —сыснасене.

Пирĕн йалти Ваçлей йаланах çапла шутланă. Çавăнпа та хăйне „Арпус“ тесе ђĕннĕшĕн питĕ çиленнĕ.

Пĕрре вăл пасара кайнă. Çынсем арпус çинине курнă та, арпус сутакансем патне пынă. Лешсен арпуспа пĕрле тĕрлĕ йапаласем пулнă. Анђах—арпус пар-ха, тесе ыйтма пирĕн Арпус питĕ те вăтаннă. Çавăнпа та вăл:

— Çавна пар-ха, тенĕ.

Лешсем, ђасрах арпус вырăнне—шăхлиђ илсе панă.

— Ăна мар, лешне.

— Çак шăхлиђне-и?

— Ăна мар, лешне.

— Çак шĕшле-и?

— Ăна мар, çакна.

— Е-е-е, çак шертешнике-и?

— Ăна мар, лешне.

— Арпус-и?

— Кам каланă сире ман хушамата, шуйттан пырĕсем!

Çиленнипе Арпус арпусне илемесĕрех уттарђĕ.

Усламçăсем, темĕн ђухлĕ сутасшăн çунђĕç пулсан та, Арпуса арпус сутаймарĕç.

* * *

— Пĕртен-пĕр хĕр ку ман. Тархасшăн илĕр-ха пуљнитсăна сызалма, ку вилсен епĕ хам та вилеп вара,— тесе йăлăнаť Йакку Васлейĕ хăйĕн сывсăрланнă хĕрне— Плакийе-лашапа тийесе пынă та, пуљнитсана хума тархасласа.

— Кунта мар, лере.

— Мĕнле лере, воспотин тухтăр?

— Вăн лере.

— Çак тепĕр пўлĕмне-и?

— Унта мар, лере, Канаш пуљнитсине.

Йакку Васлейĕ вилес вĕçне çитнĕ хĕрне Канаш пуљнитсене тийесе пыђĕ.

— Ман хĕре пуљнитсана хурăр-ха.

— Пултараймастпăр.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен вăл сывă мар.

— Есĕр кунта сыввисене çеç сыватма пултаратрам тата?

— Ђирлисене те сывататпăр. Анђах сан хĕрне сыватма пултараймастпăр Çĕрпў пуљнитсине илсе кай.

— Лĕпĕстеттерђĕ Васлей Çĕрпўве. Кунта илеççĕ ĕнтĕ, кунта уйес хули, тесе ĕмĕтленсе пыраť.

Çук. Кунта та илмерĕç. Кунтан Шăхасана йађĕç.
Шăхасантан Канаша.
Канашран Çĕрпӳвĕ.
Çĕрпӳрен Шăхасана.
Унтан каллех Канаша.

Йакку Ваçлийĕ хĕрне пуљнитсаран пуљнитсана илсе çӳресе, хăй те ђирлерĕ. Хĕрĕн тирĕпе шăмми çеç тăрса йулђĕ. Анђах пуљнитсаран пуљнитсана хăвалама ђарăнман. Çавăнпа та Йакку Ваçлейĕ хăйĕн хĕрĕпе, çĕр тавра хĕвел çаврăннă пек, пермайах çавăрăнаť. Ђарăнасси паллă мар.

Ай-ай вăл пуљнитсасенђе ĕçлекенсене Йакку Ваçлей урапине, лаша вырăнне, кӳлесђĕ.

---

## НУША.

Нуша—ђăн-ђăнах нуша, йама çук пушта. Çĕмĕрет пуçа, курăнмасť куçа. Выђăхна тулаť, пурнăçна ђăмлаť. Сывлăху ђакаť, вăл çаплах таптаť. Пĕр, йерсен вара, пама çук тара. Тӳс!

Пирĕн Йакку нушапа йалт аптранă. Килти мĕн пур пурлăхне, карти тулли выђăхне, ашшĕ тунă шур пӳртне, ампарĕпе сарайне сутса йанă йăкăлтах; тăрса йулнă çап-çутах. Кĕрсе тухма—çурђĕ çук. Выртса канма—вырăн çук. Ăçта кайас, мĕн тăвас? Нуша çавах тасалмасť, хăй аллинђен хăтармасť. Ĕнер, каçпа, урамра çыртрĕ йытă уraran. Çирĕм çулхи сăкмана татса илђĕ аркăран. Нуша!

Пĕрре, ирех—ирхине, утрĕ Йакку кил вырăнне. Пĕр ђĕл çăкăр тытрĕ те, шап-шур тăвар сапрĕ те, ларђĕ ирхи апата, аса илмесĕр нушана. Ниçта нимĕн курăнмасť, анђах сасă илтĕнет:

— Пĕтĕмпех ан çи, ман ваљљи те хăвар?
— Ес кам?!
— Сан тусу.
— Мĕнле тус?
— Нуша йатли.

Ăна-кăна пăхмасăр, умрине ним курмасăр, Йакку ђупрĕ уйалла, ђĕр нушаран хăтălma. Урлă ура уй виçет, Йаккун ăш-ђикки вĕçет. Кутсăр-пуççăр çил-тăман

тăваť ђупса тăпраран. Кайсан-кайсан ывăнса, таканаť ку урараn. Çырма пуçне—çăл куçне выртрĕ Йакку шыв ĕçме.

— Ман вађђи те хăвар-ха Йакку!

— Ах, тур усала сир, терĕ Йакку шикленсе.

— Еп усал мар, мана сирес çук.

— Тата ес кам?

— Сан тусу.

— Мĕнле тус?

— Нуша йатли.

Йакку сикрĕ тăђĕ те, кайрĕ йăвăр хуйăха:

— Мĕнле каçас, мĕн тăвас? Пĕр çакăнтан каçсассăн хăтăлăттăм нушаран.

— Йакку, ма ђасрах калаçмастăн? Епĕ каçнă вĕт, паçăрах.

— Ес кам?

— Сан тусу.

— Хăшĕ?

— Нуша йатли.

Кив сăхманăн аркипе Йакку куçне шăлђĕ те, утрĕ вара кайалла, хăй çуралнă йалалла.

Ку йумах вăл авалхи. Анђах пур-ха авалхин йулашкисем пайанхи кун та.

Çенťапĕрĕн йулашки кунĕсем темрен те ирсĕр—пылђăклă. Çапла нуша пылђăка пăхмасť, хурлăхлă ђуна канăçлăх сунмасť. Нуша вăл çынна пĕр хĕрхенмест, тархасласан та сăмах та ђĕнмест.

Çапла пĕрре тимĕрђĕн арăмĕ ђирленĕ. Вăл ăна сыватма йĕрсем йĕрленĕ. Анђах йĕрĕ ун питĕрĕнсех пынă, таса йĕр çине пылђăк тум тытнă. Нуша! Тухтăра ђунтанах ђĕннĕ, ђирлĕ арăмне шел тума сĕннĕ. Тухтăрĕ ăна сăмах та хушман, ђирлĕ çын патне кайма шут тытман. Ђирлĕ арăмĕ виç кунтан вилнĕ, тимĕрђе хуйхă çавăрса илнĕ.

---

## ЂĂВАШЛАНАТПĂР.

Уђрештенисене ђăвашлатмалла, тенĕ постановлени пур çĕре те çитсе çапăннă. Çавăнтан вара пур уђрештенисем те „ђăвашланма“ тытăннă.

Кирек йепле те пулин ĕçе пурнăçа кĕртес пулсан, епĕр комиççисем урлă ĕçлетпĕр. Çавăнпа та, уђреште-

нисене ђăвашлатма та комиççи уйăрма лекрĕ. Паллах, комиççи пĕр çынтан çеç пулма пултараймасť, унта темиçе çын уйăрса хума лекет.

Пирĕн уђрештенире пурте ђăваш пирки, епĕр ку ĕçе комиççи уйăрмасăрах пурнăçа кĕртрĕмĕр. Ытла та ђăвашланса çитнĕрен пĕр вырăса çĕнĕрен илтĕмĕр. Çавăнтан вара пирĕн уђрештенинђе пĕр вырăс хутшăнђĕ.

Пĕрре ирхине пасар витĕр тухатăп. Хам йулташа курах кайрăм.

— Ăçта слушит тăватăн-ха есĕ хаљ? тесе ыйтрăм выљатса сулахай алла парса.

— Урамра, тесе хуђĕ.

— Мĕнле урамара?

— Çаплах, урамрах...

— Пасар вырăншĕн пуçтармастăн пуљ?

— Мана хама пасартан пуçтараççĕ.

— Ара, мĕн ĕçлетĕн вара есĕ?

— Мĕн килнĕ ăна...

— Ăнланса илеймерĕм-ха епĕ сана, тесе вăтанса каласа хутăм йулташа хирĕç.

— Ăнланмарăн пулсан, ăнлантарам.

Пирĕн уђрештенире вырăссем нумай пирки ђăвашлатма тытăнђĕç. Вăл ĕçе пурнăçа кĕртме комиççи уйăртăмăр. Çавăнтан вара мана уђрештенирен „ђăвашлатса“ хуђĕç. Хаљ ăçта килнĕ—унта çапкаланса çӳретĕп. Вырăн тупаймастăп... Çитменнине арăм та пулин ђăваш... ађисем те ђăвашлах пуплеççĕ. Ђăнах!...—тесе хуђĕ манăн йулташ сассине урăхлатса.

— Ђăвашсене лайăх çав...

-- Латнă есĕ ху вырăнта пурăнатăн та..

— Еп ђăваш, çавăнпа вырăнта.

— Латнă сирĕн пуçлăх ђăваш та, тесе хуђĕ йулташ кулнă пек пулса.

— Сирĕн тата?

— Ђăвашах та... арăмĕ хулари хуçа хĕрĕ... Çавăнпа та вăл ђăваш арăмĕсене килĕштерсех те каймасť. Арăмĕсем пирки упăшкисен тӳсмелле пулаť. Мана та çав шăпа тухрĕ пулас ĕнтĕ... Пĕркунђе пĕрре хăнана ђĕнтĕм. Ман пуçлăх арăмпа вырăсла пуплесшĕн. Анђах вырăсла пĕлеймест ман мур арăмĕ! Тухса кайнă ђух çаплах каласа хăварђĕ вара:—плоххой ты ђеловек, Иванов, и шена у тепе по руски не снайĕт, терĕ.

— Сан ěç çук ěнтě ман арăмпала, тесе хутăм епě ăна.

— Посмотрим! терě те тухрě те, кайрě. Сывă пул тесе те хăвармарě.

Ку вăхăтра каланђђа çинђи ђан тăххăр сăвтарђě. Епě те йулташран сăмаха пěтермесěрех, васкаса уйăрăлса кайрăм.

Çав кунах пěр пысăк уђрештени умěнђен иртсе пыратăп. Алăкě çинђе пěр хут çакăнса тăрать. Вулас килмесěрех вулама тăтăм: борне те пилтермелле! Байан 6 ч. бор де собрани боладь. Чувашизация доклат боладь. Бор де кил!

Местком.

Шăп 6 сехет çитсен, утрăм çав уђрештени умнелле. Уткаласа çӳретěп. Пěр паллакан слушăшђипе çапкаланса кěрсе кайрăм.

Малтан. токлатне итлерěмěр. Унтан комиççи суйлама тытăнђěç.

Пухăва 13 çын пынă. Вěсенђен: ђăвашсем „нумайтарах“—2 çынна çитеççě. Вырăссем 11 çын „анђах“!

Комиççийе 7 çын çырђěç. Анђах 7-шě те вырăс пирки, пěр ђăвашě хăй йулташне—тепěр ђăваша хутăштарђě. Сасăлама тапратрěç:

— Воскреççенскайа! Кам уншăн?

10 сасă пěр харăс.

— Литсемерăв!..

Каллех 10 сасă пěр тăван.

— Пасхаљнăй!..

10 сасă пěр çăвар.

— Роштеçтвенскайа!..

— Мана сăмах парăр-ха, терě пěр ђăвашě ђатаймасăр.—Комиççийе суйласа та çитеретпěр. Пурте пěр сасăпа вырăссем кěрсе пěтрěç. Неушěли пěр ђăваш та кěртес мар, терě.

Воскреççенскайа сиксе тăђě те:

— Ман хушамат малашне Воскреççенскайа пулмасть. Епě ěнер САКС-а хушамата улăштарма сайавлени паттăм. Епě малашне Павлăвă пулатăп. Рас Павлăвă, ђăваш шутне те кěме пултаратăп.

— Тěрěс! терěç 10 çын харăс.

— Пирěн хушаматпа мар, ěçпе, ђěлхепе ěçлемелле пулать!—терě ђăваш, хăйěн малтанхи сăмахěсене хӳтěлесе.

— Ĕçлетпĕр, хаљ пирĕн ђăвашла çапакан машшин пур, тесе хуђĕ Роштеçтвенскайа машшинисткă.

— Машшинĕ пур, пĕр сăмах ђăвашла пĕлетни?

— Как билмест? билед! Во...

Вĕсен пухăвĕ йепле пĕтнине пĕлместĕп. Епĕ петиђђен кĕтсе лармарăм. Анђах уђрештенине ђăвашлатакан комиççи ĕçе тытăнсан—11 вырăсран 13 вырăса çитнĕ, 2 ђăвашран—пĕр ђăваш условнă хăварнă, тенине илтнĕђђĕ. Воскреçенскайа телопроисвотиттĕл: билет вырăнне—билмест, теме вĕреннине хам илтнĕђђĕ.

Тата пĕрре çак уђрештенирен машшинпа çапнă хута пĕр йалтан килнĕ çын аллинђе курнăђђĕ. Унта çапла çырнăђђĕ: сан ись комиссар алы хоны дорох райисполкома йани. Конда зок.

Çапла ку уђрештени те „ђăвашланма" тытăннă. Ĕççыннисемшĕн тăракансем мар, пуп йăхĕсем, ĕлĕкхи хуçасен йулашкисем сырса илнĕ пулнă мĕскĕн уђрештенийе. Тасату вĕсемшĕн ырмарсене тымарĕ-мĕнĕпех кăкласа ывăтакан вăйлă тăвăл пулнă.

---

## ÇЕМЕН ПАЛЂĂ.

Çеменку Палђă хăй ăçтан, камран çуралнине те пĕлмест вăл: те пĕлĕтрен ўкнĕ, те çĕртен çурăлса тухнă. Амăшне вăл курман, амăшĕ çинђен илтмен те, пĕлмест те.

Çемен вăл хăй йађĕ пирки те иккĕленме хăтланат̆. Мĕншĕн тесен ăна вăл—хăй ўссе çитсен, салтака кайма йат тĕрĕсленĕ ђух çеç пĕлнĕ. Çамрăк ђухне ăна, ђĕлхе çине мĕнле йат аса килнĕ—çав йатпа ђĕнеђђĕç: Çемен, Çерук, Çăпрук, Тарук, Карук... Хăйĕн мĕн пур пек йађĕсене вăл аса та илсе пĕтерейместь.

Салтака кайасса та вăл тен çыншăнах кайса килнĕ пуљ? Пĕлме çук! Салтака кайма кантуртан йат тĕрĕслеме килсен, йал çыннисем: пирĕн йалта Çемен Палђă йатлă çын çук, пĕлместпĕр тесе алпусса йанă.

Ку вăхăтра Çемен Палђă пĕр кулак патĕнђе тарçăра пурăннă. Кулак та, йалти çынсем пекех, Çемен

Палҫа тĕрлĕ йатсемпе ҫĕннĕ. Анҫах Ҫемен Палҫă хăйне тĕрлĕрен йатпа ҫĕннĕшĕн ҫиленмен. Уншăн пулсан йатне хăт Лĕпĕш тесе ҫĕн. Анҫах лĕпĕш вырăнне салакайăк тытса ан кайтăр.

Ҫемен Палҫă кулак патĕнҫе питĕ йӳн хакпа пурăннă. Ҫулталăкне те вăл пилĕк тенкĕ ҫеҫ илнĕ. Ҫавăнпа та хăш-пĕр вăхăтра вĕсен ĕҫ ҫинҫе тавлашусем те тухкаланă.

— Муҫи, епĕ ака та тăватăп, сӳрине те ҫӳретĕп, каҫхине утсем ваҫҫи мана пăтраттармасан та йурĕҫҫĕ.

— Ниҫҫаво, тӳсетĕн.

— Апла пулсан, хак хăпартасҫĕ пĕртик.

— Мĕн?!

— Хак хăпар... Анҫах Ҫемен Палҫă каласа пĕтерейместь. Ăна кулак аслатиллĕ сассипе:

— Молҫать! тесе ҫарса лартать.

— Ҫук, муҫи, апла пулма пултараймасть. Ĕҫе тĕрĕсрех тăвас пулать. Епĕ каҫ утсем ваҫҫи пăтратмастăп.

— Тух та кай. Есĕ кайнăшăн ман лашасем выҫă тăрĕҫ тетĕним? Ступпай!

Мĕн тăвасси пур? Ҫемен Палҫăн пăхăнмаллах. Анҫах йулашки ҫулĕнҫе ҫакăн пек тавлашусем ҫас-ҫасах туха пуҫларĕҫ.

— Ступпай! Есĕ тырă вырманшăн, ман тырă уйа каймаллаи-мĕн?!..

— Сан шуйттану патĕнҫе пурăнмасан, епĕ выҫă вилмелле-и мĕн?!..

Ĕҫ шаларан шалах кĕрсе пыҫĕ. Йулашкинҫен, кулак йалта тупăнман, халăх ҫинҫе аса илнĕ йата: „Ҫемен Палҫăна“ аса илҫĕ те, ман патра Ҫемен Палҫă йатлă аҫа пурăнать, темле салтака ҫĕнмеҫҫĕ-ҫке ăна, тесе старшшинана вăрттăн хут ҫырса паҫĕ. Старшшинапа касак Ҫемен Палҫăна тепĕр куннех пырса тытса салтака йараҫҫĕ. Ҫакăнтан вара Ҫемен Палҫă кулак пусмăрĕнҫен те хăтăлҫĕ, хăй йатне те, епĕ ҫăн-ҫăнах: Ҫемен Палҫă, тесе шутларĕ.

*
* *

Ҫемен Палҫă салтакра ҫылайăах пурăнҫĕ, Октăпĕр револҫутси хыҫҫăн ҫеҫ таврăнҫĕ. Анҫах вăл ҫавах киле таврăнман, хăй пĕҫĕкренпе уснĕ йала ҫеҫ таврăннă. Мĕншĕн тесен ун килĕ-ҫурҫĕ, пĕлĕш-танăш ҫук. Ҫавăнпа

та унӑн никам патне кӗриҕҕен, йал хурал пӳртне кӗмелле пулҕӗ.

Йал хурал пӳрҕӗ тулли халӑх.

Ҫпискӑ тунӑ пек, темшӗн хӑш-пӗр ҫынсен йаҕӗсене ҕӗнеҫҫӗ:

— Никколай Кӗркуҕ.

— Иван Тавытӑв.

— Танил Ёлӗкҫейҕ.

— Михаил Куҫмин.

— Ҫемен Палҕӑ, терӗ Ҫемен Палҕа алӑкран кӗнине курса Калмӑк Кӗркури.

Ҫемен Палҕ хӑранипе алӑкран кайалла тухма тытӑнҕӗ.

Анҕах халӑх ытла та нумай пулнипе, алӑк уҫӑлас вырӑнне хупӑнса ларҕӗ.

— Мӗнле Ҫемен Палҕӑ?!

— Ак самай асли, ай паҕӑшкӑ! терӗ Калмӑк Кӗркури Ҫемен Палҕӑ ҫине кӑтартса. Калмӑк Кӗркури вӑл хӑй йуратнӑ ҫынна йаланах: паҕӑшкӑ, тесе ҕӗнет. Паҕӑшкӑ уншӑн аслӑран та аслӑ сӑмах.

— Тавай, тавай, терӗ халӑх.

— Есӗр тытса панипе кайас ҫук еп текех, терӗ ҫӳҫенсе Ҫемен Палҕӑ.

— Претҫетаттӗле кӗртес тетпӗр сана...

— Е-е-е, епӗ мана каллех салтака йарасшӑн тесе. Претҫетаттӗле пулсан пулӑп, епӗ хаҫатсем те вулама пултаратӑп.

Ҫакӑнтан вара Ҫемен Палҕӑн „карйерӑ“ текен ҫулӗ те пуҫланса кайрӗ. Унӑн хӑйне панӑ йаҕӗ те тӗплӗнех тӗплӗнҕӗ.

Ҫемен Палҕӑ, ӗлӗкренех тарҫӑра пурӑннӑ аҕа, ӗҫрен ӳркенсех тӑмасӗ. Пурна-киле ҫавӑнпа та унӑн хӑш-пӗр ӗҫӗсем Шупашкарти уҕрештенисене те палӑрма тытӑнаҫҫӗ.

Ҫак тухса кайакан йулташ вырӑнне, ҫав. Ҫ. П. илсе килес мар-ши пирӗн, кунта ӗҫлеме пултарайӗ-ши? тет пӗрре Шупашкарти уҕрештени пуҫлӑхӗ, хӑйӗн ҫекреттарне ҕӗнсе.

— Килтӗр, терӗ ҫекреттарӗ калаҫас килмен сасӑпа, хӑй умне пырса хунӑ хут ҫинҕен „Хӗрлӗ салтак“, „Хӗрлӗ ҫалтак“ тесе пуҫне пӑрса йусаса.

Çемен Палђă Шупашкарта. Шупашкарти уђрештени пуçлăхĕсемпе çыруçисем хуласенђе ђылайранпа пуpăннă çынсем. Çавăнпа та вĕсен хăйулăхĕ те вĕрирех. Çемен Палђă вăл мĕн?!

Йалтан килнĕ ђăваш ађи. Пиçсе çитмен. Çине те илемлĕ тумтир витмен. Куна малтанах хутсем çыркалама лартрĕç. Хутран-ситрен урайсем шăлтараççĕ. Сĕтел çийĕсене тасаттараççĕ. Ăна та кăна та тутараççĕ. Ĕç хутшăнсах пыраť. Çекреттарне туйа та илсе памалла, паљттуне те илсе тăхăнтармалла. Çемен Палђă малтан пурне те ĕçлет. Анђах кайарахпа ђăхăмлама тытăнаť.

— Ку ман ĕç мар, Ентим Йаккăлђ, тет хăйĕн хĕрарăм туталлă çекреттарне.

— Ниђђаво!..

— Мана уншăн ĕç укçи хушмалла.

— Ниђђаво. Тӳсен!...

— Апла ĕçлеме пултараймастăп, йе укçа хушăр, йе çав урай шăлассине ман çинђен илĕр.

— Йурамасť.

— Еп текех урайне шăлмастăп.

— Урайне мар, ху сĕтелне хăварма та пултаратăн. Ес кайнăшăн пирĕн ĕç ђарăнас çук. Ступпай к ђортту!.

— Апла мар...

— К ђортту, к ђортту, терĕ çекреттар, çине тăрса.

— Ахахах! Ĕлĕк мана кулак çапла калађђĕ. Хаљ апла калакан çук тесе. Ман умра хаљ те çав кĕлеткех тăраç!. Еп хама хамах самокриттĕклерĕмĕç, терĕ хурланса Çемен Палђă.

Çемен Палђăна кăларса йарасса йаман. Анђах тепĕр сăмах хушсассăн кăларса йарасси курăнсах тăраť. Вара Çемен Палђăн тухса каймаллах пулаť. Ара мĕн тăван?. Самокриттĕк вĕт!

---

## УТЛАНТĂМ СЕНĔК.

Ђикрĕм пĕр тенкĕ, утлантăм сенкĕ, вĕçрĕм вĕçмелле, тĕнђе тĕрĕслеме. Çулĕ тумхахлă, сенкĕ хăвăтлă, ей та ну-у! вĕç те шу-у!

Сенĕкĕм шунипе, ђăр-ђăр тунипе çул çиçĕм çиçет, куç-пуçăм вĕçет. Ватă çын курат̆—сăхсăхса йулат̆, сарă хĕр курат̆— йăл кулса пăхат̆. Ват карђăк пулсан—хĕрхенсе йĕрет, путсĕр йыт курсан—вĕçĕмсĕр вĕрет.

Çитрĕм Вăрнара, кĕтĕм пĕр йала (пĕлмесĕр намăса) Çĕнйал хапăса. Пĕр урам хĕрарăм (шутсăрах хĕрарăм) вăрçаççĕ, сураççĕ, ђышкăпах йунаççĕ. Ман сенкĕ—хуйрĕ, мĕн ĕçне туйрĕ, вĕçрĕ çавăнта, ђунтан тарăхса. Те упа, те кашкăр, (уншăн ан ташлăр!) тăрат̆ варринђе, тăват ура çинђе.

— Ку кам сысни, хăш хĕрĕн йысни? тĕрĕм еп анса, патнерех пырса.

— Есĕ ан мăшкăла, вăл пирĕн упăшка—Михала Çаççимĕ, ун пуçне йыт çимĕ! Пире, вунсакăр çынна, кĕртрĕ вăл ђина: масмак хуртарђĕ, сурпан çыртарђĕ. Авалхи йăла: пурте туйла кађђа кайрăмăр, арăм пултăмăр. Туйсăри вирлĕ, ĕçрĕ те ӳкрĕ, тапса та тăмаст̆, хаљ пире пăхмаст̆. Шуйттан ывăлĕ, ĕçкĕшĕн авланђĕ, терĕç пĕр харăс вунсакăр арăм. Арăмсем лайăх, ĕçĕсем йапăх, вунсакăр арăм—пурин те пĕр парăм.

Ђунтанах хĕрхентĕм, (аçама пĕркентĕм) вĕçрĕм малалла, урăх йалалла. Пыратăп-пыратăп, такăр çул шыратăп; Çĕрпӳ районĕ, кунта мĕн пулĕ? Кĕтĕм Вĕрмере, каç пулнă çĕре—хурах та распой! Тăхта, сенĕк стой! Йакку Платтунĕ (хаљ ĕнтĕ тунĕ) Илйе арăмне туртат̆ сарайне. Тутăрпа мăйĕнђен, кăвак сăн çапиђђен, сĕтĕрет лерелле (шухăш кĕнипе).—Ех, ты ђурт! Йар çынна—ан турт! Шуйттан меçникĕ, хĕрарăм леçникĕ! Пăхма та киђем, малалла вĕçем. Малалла мĕн пулĕ, ăна куç курĕ.

— Сторовă, муђи, шур сухал хуçи! Ма йытă улат̆, ку хăш йал пулат̆!

— Виçи-касси, терĕ муђи.

Урам варрипе, пыратăп майĕпе. Сенĕк ĕшенђĕ, кайма çиленђĕ. Мĕн тăвас? Хваттер шырас!

Пӳрт тулли курăс, те вите, те сырăш, пĕлме çук, хĕн, ĕçлеççĕ мĕскĕн! Ик пĕђĕк ађа ђăпта çапаççĕ, патаклă хађђа вăйпа туптаççĕ. Пĕр сарă сухал (пăхма çук кахал) хăйаккăн выртат̆, ђĕлĕмне паккат̆.

— Сирĕн аçу-аннӳ пур-и?

— Ӳк!

— Ăçта кайнă?

— Вийнĕ!
— Мĕн йатлă пулнă?
— Петĕй Иййи!

Ик тăлăх—пĕр кăлăх канмасăр ĕçлеççĕ, выçах вилеççĕ. Çак ҕăпта хуçине лартас ким çине, йарас хулана—ăшă çурта. Кĕпине хывса, вĕлтренпе çапас, сиктĕр çӳлелле—маҕҕа çинелле. Ай-ай пулĕҕҕĕ, ман сенкĕм те кулĕҕҕĕ!

Ей, ну йара пар, йарапине пире пар! Вĕлтрен кĕсле йанратаť, ҕăпта хуçи таш ташлаť. Ей ну, ей ну, ей ну! Ух! ух, ух!

Ну, çитĕ! Хам та тарларăм. Кайас килелле—йатлаçĕ арăм.

Савнă туссем—йулташсем, „Капкан“ шурнал тусĕсем, пайанлăха сыв пулăр, тепре курсан вулăпăр.

---

## ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ.

Хатĕрленеççĕ.
— Мĕн хатĕрленеççĕ?
— Совет суйлавĕсене!
— Камсем?
— Пурте!
— Мĕнле хатĕрленеççĕ?
— Ак çапла.

Урама тăрăх шурă пӳртре, сарă кĕреке хушшинҕе, илтĕнеççĕ сасăсем, хутран-ситрен ташăсем.
— Ей, ну, Йак-ку!..
— Çакă мĕн, ак-ку?...

Арман хуçи килĕнҕе, пуйан Йакку патĕнҕе, шăматкунтан пуçласа, пайан ĕнтĕ ернекун, йухаť шывла сăмакун. Анҕах ĕçнĕ хушăрах, йумах çапаç ĕç çинҕен: кил хуçийĕ урăрах—çапла ыйтрĕ Уççимрен;
— Еппин манах суйлатăр?
— Ťата урăх кам пултăр?... терĕ Уççим çиленсе, сăмакунне çĕклесе.
— Сывă пултăр пирĕн çĕнĕ претçетаттĕл Йакку, урра!..
— Ур-р-р-а-а!
— Ур-р-р-а-а!

Кунтăкпуç Çимйан, Урлăшăл Миљљан, Йаккурђђа Михали, Лађака Микули, Ђикмекле Ративан, Çырмапуç Йăван, Унтăркка Йакурĕ—саккăрăн мĕн пурĕ. Пурте „ырă çын“ ађисем, хăшĕ арман хуçисем.

— Мĕн йытăсене суйлас? Суйлăпăр санах, Йакку!

— Хытăрах тăрас пулаť вара.

Хамăр хушăран кĕртмесен май килмест: налокĕ—вăрманĕ—вăр...

Кантăкпуç Çимйан ернипе урăлман, йăтрĕ куркине, пађĕ сассине:

— Са стурави, са çĕнĕ çататлă!

— Турă пулăштăр, терĕ Йакку.

— Иртнĕ çулта пирĕн ытла савăнмаллах пулмарĕ. Нумай шăйрăксем пулса иртрĕç. Кам астумасť, пĕђĕкренпе тертленсе, кĕтў патĕнђе пиçнĕ Лекçейе парас вăрмана Кутăн Йаккăва арман тăрлама панине? Камран килнĕ—хамăртан та! Суйлав комиççине кам лекнĕђђĕ пĕлтĕр? Йакку хăй. Кама сассăр хăварнă пĕлтĕр? Кайăк Петĕрне! Мĕншĕн тесен вăл хăй ĕçлесе тупнă тырра икĕ лав сутнă пулнă. Суйлав комиççине кăçал хамăртан суйлатпăр. Йакку пеккисене сасă çук!.. тесе пĕтерђĕ хăй сăмахне патрак, Қирук.

— Ђăн çав, ђăн! терĕ салтак Петĕр арăмĕ,—пĕлтĕр епĕ илес укçанах илеймерĕм, çав карма çăварсем советра ларнă пиркийех.

— Пĕлтĕр есĕр мана сăмах хуштармарăр. Ун ђухне епĕр пиçсе çитейменђђĕ. Хаљ кама суйламаллине, кам хамăр çынне сиссе çитрĕмĕр.

— Пĕлтĕр те сиснĕ... анђах... ухмах пулнă... терĕ Петĕр арăмех.

— Ан ђар-ха есĕ, инке, терĕ комсомол йађђейккин çекреттарĕ, Петĕр арăмĕ çине кăшт кулнă пек пулса.

— Ара...

— Йурĕ. Малалла... Хаљ ĕнтĕ хамăр кăнтитатсене уйăрма тытăнатпăр.

Қунта та хатĕрленеççĕ иккен кăсем, хамăр çынсем; комсомол, хĕрарăм, патрак, ђухăн—тĕп сийĕ çак пуххăн... Суйлав çитиђђен, хăйсем хушшинђен: паллă турĕç комиççи, лекеймĕ текех арман хуçи.

— Мĕнле, Йаккусен ĕçĕ тухĕ-ши.

— Тухмасăр... тухĕ... халăх пўртĕнђен—сысна витине, терĕ ĕнер салтак Петĕр арăмĕ.

# ЂĂРСĂРЛАНСА.

Кĕрĕк пиншаклă, лутакарах, сарă çын. Картусне пусса лартнă ђалăшла, ĕнсе çинелле. Хулĕ айĕнђе пысăкран пысăк кĕнеке. Сылтăм аллинђе шĕп-шĕвĕр вĕçлĕ хĕрлĕ кăранташ.

— Сасартăк кĕмелле!—систерђĕ хăйпе пĕрле пыракан икĕ йулташне.

— Нта-а! Ђăххисене тартас марђђĕ,—шăл витĕр пĕрĕхтерђĕ сурђăкне йулташсенђен пĕри.

„Кăр-р-рик!“—турĕ Кăпитун хапхи малти урамра.

„Хам, хам, хам!“—вĕрсе йађĕ пусма айĕнђе ула йытти.

— Кăтартăпăр „хам, хам, хам“. Вылесай!—камантă пађĕ пусма айĕнђи йытта, кăранташĕпе йунаса, сарă çын.

Йытă лăпланђĕ. Хăрарĕ пулас ĕнтĕ мĕскĕн.

— Тухатăн тăк, тух! Ђĕрĕлле хăталаймăн çавах!—çиленђĕ сарă çын хăй сăмахне йытă итлеменшĕн.

— Аллуна ђиксе йĕкĕлте!—кăш тĕкрĕ кăна пĕр йулташĕ.

— Хăр-р-р-р-, хам-м-м!—тулашрĕ йытă.

— Ай, ай, ай!—аллине сасартăк туртса илђĕ йытă патĕнђен сарă çын.

Килнĕ çынсем пўрте кĕменнинђен тĕлĕнђĕ кил хуçи. Ђăтаймасăр тухрĕ хирĕç кăсене.

— Мĕн пулђĕ ара аллуна?—хăраса васкавлă ыйтрĕ йунлă аллине йурпа çуса тăракан сарă çынтан.

— Молђаă! Мăшкăлама-и есĕ манран?!

— Ђимер-ха, Кирил Павăлђ! Ара...

— Молђаă! Ма кăкарман?!

— Мĕне вара?

— Мĕне.. Йыттуна!

— Кăкарнă. Кунталла тухаймасă вăл.

— Молђаă! Проттоккол.

Кĕђĕç пўрте. Ђылайђђен çырăнђĕ проттоккол.

„Именем Российской Социалистической Федеративной Советской Республики. Я, председатель правления колхоза, Павлов“... пуçланаă „...пĕтĕм халăх куç умĕнђе персе пăрахмалла“—пĕтет проттоккол вĕçĕнђе.

— Кирил Павăлђ! Уншăнах-и? Ађасем тăлăха йулаççĕ. Тархасшăн каçар. Ўстерем ĕнтĕ вĕсене!—урайĕнђе йăваланса тархаслама тытăнђĕ кил хуçи—Кăпитун.

— Хăна мар, йыттуна пемелле тунă.
— Апла пулсан хуҫ... Кăкарнă ăна та...
— Молђаҫ! Ёне миҫе?
— Ёне ҫуккине хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ.
— Ăҫта тата ĕне?
— Ара... Атте хăй вилиђђенех сутнă та...
— Колхоса кĕресрен хăранă, снађђăт. Против саккона?!
— Ара... Атте вилни сакăр ҫул тултараҫ ĕнтĕ мункунта.
— Молђаҫ. Проттоккол!
Ҫырђĕҫ проттоккол.
— Алпус!—сĕнђĕ проттоккола кил хуҫине Кирил Павăлђ.
— Ара... Алпусма пĕлместĕп ҫав,—хирĕҫлерĕ Кăпитун.
— Кантăрр-р-р!
— Хĕрес хума пĕлетĕп алпусас вырăнне.
— Ехе-е-е! Есĕ турă саккунĕпе хăратасшăн-и пире? Ҫектант?
— Ђим-ха, Кирил Павăлђ!
— Молђаҫ. Атăм пайне пĕлтеретпĕр. Ек-к!..
Ек-к!—Хăсма тытăнђĕ проттоккол ҫырнă ђух сĕтел хушшинђех Кирил Павăлђ!
— Е-е-е! Есĕ мана емел парса вĕлересшĕн-и?!—хирĕҫме тытăнђĕ Кăпитуна.
— Ара! Епĕ сан патна та пыман-ҫке...
— Труписене хупнă. Сĕрĕм тивертсе вĕлересшĕн.
— Вутă та хутман пайан, Кирил Павăлђ.
— Молђаҫ, клас тăшманĕ!
Кирил Палђпа килнĕ икĕ йулташĕ ђĕнмеҫҫĕ нимĕн те. Хăйсен претҫетаттĕлĕ мĕн хăтланнине пăхса кăна лараҫҫĕ тĕлĕнсе.
Кăҫал ҫеҫ кĕтӳ кĕтнĕ Кăпитун, хаљ клас тăшманĕ пулнăшăн—тĕлĕнсе, хытса кайрĕ.
— Итле-ха, сыпнă есĕ пайан пăртак!—кĕретĕнех каларĕ Кăпитун Кирил Павăлђа.
— Е-е-е! Есĕ мана намăс кăтартма-и? Контăрр!
Арестоваҫ. Проттоккол.
— Ђим-ха, Кирил Павăлђ!
— Молђаҫ! Сурăх миҫе?
— Иккĕ!
— Ну-кă! Тухса пăхар!

Пурте тухрĕç сурăхсене тĕрĕслеме. Ара, вĕсене колхоса пĕрлештермелле.

— Икĕ сурăх тăраççĕ вите умĕнђе. Урăх нимĕнле выђăх та курăнмасť килĕнђе.

— Ыттисем ăçта?—хайарланђĕ Кирил Павăлђ.

— Урăх пулман ман.

— Молђаť! Тытса пар пĕрне.

— Мĕншĕн?

— Пăрламалла штолђ?

— Пăрламалла пулђ...

— Ну, вот, тытса пар.

— Мĕншĕн? Ара...

— Миçе путек тăвассине шута илмелле. Рас, коллектив тăк, коллектив!

Тытса пађĕ Кăпитун ватă, шурă сурăхне. Тытăнђĕç пахалама. Хыпашласа пăхаççĕ сурăх хырăмне.

— Икĕ путек пулаť!—çырма тытăнђĕ кĕнеки çине Кирил.

— Тăхта-ха, Кирил Павăлђ! Çилли пĕђĕк вĕт.

Пĕрре кăна пулаť пулмалла,—вăрахăн пуçне хăпартрĕ сурăх çинђен йулташсенђен пĕри.

— Кун ђухлĕ пурăнса та нихçан та йĕкĕреш туман!—справккă пађĕ Кăпитун.

— Е-е-е! Есĕ пĕр путекне пытарса, хăварсшăн-и? Арестоваť! Проттоккол!

Вăйпа пусса çырнипе кăранташĕ хуçăлђĕ. Кĕнеки тешилпеле хупăнђĕ.

— Ђăх миçе?—Ыйтрĕ çемçерех сасăпа.

— Пиллĕк!

— Тавай кунта!

— Ара кĕлет айĕнђе пулђ...

— Нта-а-а! Кĕлет айĕнђе? Пытарнă, снађђат?! Илсе тух пĕр ывăç сĕлĕ. Ну!

Кăпитун пĕр ывăç илсе тухса пађĕ сĕлĕ.

Кирил Павăлђ илђĕ ăна хăй аллине.

— Ђип! ђип! ђип!..

Ђупса тухрĕç ђăхăсем кĕлет айĕнђен. Йулмарĕç пĕри-пĕринђен.

— Пиллĕк. Аллă... Пиллĕк хут аллă... Пулаť, снађђăт, икĕ çĕр аллă. Пирĕн колхосра кайăк - кĕшĕк ĕрђетмелле пулаť. Снађђăт санăн çăва тухсан икĕ çĕр аллă ђĕпĕ кăларса памалла. Снађ...

— Ђим-ха, Кирил Павăлђ! — пӳлђĕ Кăпитун.

— Молђаť!

— Ăçтан ун ђухлĕ.

— Колхоса хирĕç пырасшăн, та?!

* * *

Çакăн пек ĕçлесе тухса кайрĕ колхос правленин пуçлăхĕ Кăпитун патĕнђен.

— Ку кам сысни? Йури кăларса йанă ĕнтĕ ăна. Спискă çине кĕртесшĕн мар ĕнтĕ. Вăт ђейе халăх. Йул çакăнта. Ăçта кайаť — çавăнта кай. Ан çухаť куç-ран! — урамри сысна патне хуралла тăратсă хăварђĕ Кирил Павăлђ хăйĕн йулташĕсенђен пĕрне.

* * *

— Пирĕн йалти ĕçсем те кĕнĕ ĕнтĕ ку статйана! — терĕç Кирил Павăлђ йалĕнђи хресђенсем „Çитĕнӳсем пирки пуç çавăрăнни“ И. Сталĕн й-шăн статйане вуласан.

# ТУПМАЛЛИ.


| | Стр. |
|---|---|
| Пе́рене хаҫађӗ | 3 |
| Пӳрократ | 7 |
| Йађӗ ҫук | 8 |
| Ђӗлхе | 10 |
| Хӗрлӗ сахӑр | 12 |
| Макар Макарђ | 14 |
| Каҫӑр уҫӑп | 16 |
| Микуђ муђи | 19 |
| Пиђет | 22 |
| Сӣес хупӑнни | 24 |
| Хӗритун. | 26 |
| Сыпӑксӑр ункӑ | 31 |
| Нуша | 33 |
| Ђӑвашланатпӑр | 34 |
| Ҫемен Палђӑ | 37 |
| Утлантӑм сенӗк | 40 |
| Хатӗрленеҫҫӗ | 42 |
| Ђӑрсӑрланса | 44 |

Хаке 25 пус.
Цена 25 коп.

Х.—3

С. ШĂПĂҪАК
Фельетоны

На чувашском яз.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР.
Москва, центр, Никольская, 10